М. Горький...

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Декабрь 2 юнкун № 235 (9144) Хакĕ 20 пус. 36-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

Колхозсемпе МТС-сенчи стена хаçачĕсен ĕçне куллен ертсе пымалла

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ совет халăхĕ умне пысăк та ответлă задачăсем кăларса тăратрĕ. Партипе правительство колхозсене, МТС-семпе совхозсене малалла тĕреклетме материальнăй-техникăлла тата организациллĕ условисене пурне те туса пама тăрăшаççĕ. Анчах çав майсемпе тата условисемпе пурнипе те лайăх усă курас тесен, кашни колхозри, машина-трактор станцийĕпе совхозри вăйсемпе тата средствăсемпе туллин усă курмалла, колхозниксен, МТС-семпе совхозсенчи рабочисен йышлă массисене хĕрÿ ĕçе çĕклемелле, вĕсене яхуçалăхне малалла аталантарас задачăсене пурнăçа кĕртме мобилизацилесе пымалла. Ку тĕлĕшпе парти организацийĕсене колхозсемпе МТС-сенчи тата совхозсенчи нумай йышлă стена хаçачĕсем—вырăнти партипе профсоюз тата комсомол организацийĕсен, колхозсен правленийĕсен, МТС-семпе совхозсен дирекцийĕсен активлă помощникĕсем пулса вырăн йышăнса тăраççĕ.

Стена хаçачĕсем пулăшнипе партипе профсоюз тата комсомол организацийĕсем хăйсен массăсемпе çыхăнса тăрассине çирĕплетеççĕ, колхозлă ял ĕçченĕсене, МТС-семпе совхозсенче ĕçлекенсене Коммунистсен партийĕпе Совет правительствин политикине тăтăшах ăнлантарса параççĕ, вĕсене яхуçалăхне аталантарас ĕçĕн халех татса памалли задачисем çинчен тĕплĕн каласа параççĕ, тырпул тухăçлăхне хăпартассишĕн, выльăх-чĕрлĕхрен тупăш ытларах илессишĕн социализмла ăмăртăва пур майсемпе те вăйлатса пыма мобилизацилеççĕ.

Стена хаçачĕсем ĕççынисен творчествăлла пултарулăхне палăртмалли, ĕçри çитменлĕхсене хăюллăн критиклемелли тата çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтермелли хăватлă хĕçпăшал пулса тăраççĕ. Совет халăхĕ хăйĕн стена хаçачĕсене пысăк вырăна хурса хаклать, мĕншĕн тесен стена хаçачĕсем коммунизмла пичетĕн паллă традицийĕсене пурнăçласа пыраççĕ.

Стена хаçачĕсем ăнăçлă та йĕркеллĕ тухса тăрасси, чи малтанах, ку ĕçе парти организацийĕсем куллен-кун тата пĕлсе ертсе пынинчен килет. Пирĕн республикăри чылай колхозсенче стена хаçачĕсене куншăр çул хушши ĕнтĕ пĕр сиктермесĕр, йĕркеллĕ кăларса тăраççĕ.

Кашни стена хаçачĕн мухтава тивĕç лайăх енĕ, паха традицийĕ пур. Вăрнар районĕнчи «Первое мая» колхозри «Коммунизм çулĕпе» стена хаçачĕ (редакторĕ [...]таш) кăçал алла номере [...]. Ку стена хаçачĕ уйрăмах самокритикăна вăйлăн сарса [...]ярса тăрать. Стена хаçачĕн [...]мерĕнчи юлашки икĕ колонкин[...] йĕркесене» колхозри какал[...]пăр хăйшĕн ытларах тăраша[...]ççĕ». Критиклекен пысăк [...]тăрăх стена хаçатĕнче карика[...]турессĕ, вĕсен айне такмакласа [...] çырса хураççĕ. Бунсăр пуçне [...]ат редколлегийĕ паллăрах ĕçсем [...] час-часах «Мухтав» тата «Си[...]сем» кăларать. «Коммунизм [...]» стена хаçачĕн «световой хаçат» [...]ре те лайăх опыт пур. Кино[...] умĕн кино курма пынă çын[...]ран çинче колхоз ĕçĕнчи [...] çитĕнÿсемпе паллаштараççĕ, [...] сатирăллă номерсем пуç[...]. Ку ĕçе стена хаçачĕн ред[...] партбюропа килĕшсе тăвать. [...] колхозниксем питĕ юратаççĕ. [...] хаçатра» пĕлтернĕ фактсем [...] çийĕнчех пĕтĕм ял пĕлет. Парт[...]пе колхоз правленийĕ стена [...] материалĕсем тăрăх çийĕнчех [...]мерăсем йышăнаççĕ.

[...] хаçатне йĕркеллĕ кăларас тени [...]ийĕнчен малтан, унти материалсен [...]шĕн кĕрешме кирли çинчен ка[...] районсенчи комитечĕсемпе [...] организацийĕсем ăçта стена [...] материалсен витĕмлĕхĕшĕн [...] кĕрешеççĕ, çавăнта стена ха[...]çатсем, номертен-номер интереслĕ[...]рех тухса тăрать. Анчах чылай стена хаçачĕсенчи материалсен [...]шĕн тивĕçлипе кĕрешни çук-ха, [...] хăшпĕр стена хаçачĕсем колхоз[...] МТС-ри ĕçсене лайăхлатас тĕлĕшпе [...]кеселлĕ вырăнне йышăнаймаççĕ. [...] Чутай районĕнчи ВКП(б) ячĕпе [...] колхозри «Коммунист» стена хаçачĕн редколлегийĕ членĕ П. Голицын юлташ çырса пĕлтернĕ тăрăх, унти стена хаçачĕ колхоз ĕçне лайăхлатас тесе нумай тăрăшать. Анчах колхоз правленийĕ тата колхозри пуçламăш парторганизаци стена хаçат редакцине кирлĕ пек пулăшмасть. Çавăн пирки хаçатра тухнă материалсем витĕмлĕ пулаймаççĕ, ĕçри çитменлĕхсем чылай вăхăтчен çаплипех юлаççĕ. Çав районти Энгельс ячĕпе тăракан колхоз руководителĕсем вара, критикăна чăтайман пирки, халиччен тухса тăнă «Вăйлă тырпулшăн» стена хаçатне кăларма чарнă.

Халĕ парти организацийĕсем, КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пырса, хăйсен пĕтĕм ĕçĕнче колхозсенчи, МТС-семпе совхозсенчи малта пыракан çынсем çине, çĕрĕçĕн тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн кунран-кун ÿссе, нумайлански пыракан мастерĕсем çине таянса ĕçлеççĕ. Стена хаçат редколлегийĕсен чыслă тивĕçĕ—колхоз производствинче малта пыракансен опытне анлăн сарасси, ăна колхоз производствине хăвăртрах кĕртессишĕн кĕрешесси пулать. Ку тĕлĕшпе вĕсене партипе правительство постановленийĕ тăрăх МТС-семпе колхозсене ĕçлеме янă механизаторсемпе яхуçалăх специалисчĕсем пысăк пулăшу пама пултараççĕ, пулăшу пама тивĕçлĕ те. Парти яла янă коммунистсемпе тачă çыхăнса ĕçлени стена хаçачĕсен ĕçне малалла лайăхлатма пулăшни çинчен калакан паха тĕслĕхсене нумай илсе кăтартма пулать. Анчах хăшпĕр стена хаçачĕсен редколлегийĕсем ку таранччен хаçатсен ĕçне хăвăрт лайăхлатма пулăшакан çак майпа кирлĕ пек усă курмаççĕ-ха.

Стена хаçачĕсем—колхозлă ял ĕçченĕсен социализмла ăмăртуне пуçарса, организацилесе тата сарса пыракансем пулмалла. Ку тĕлĕшпе Первомайски МТС-ĕнчи «Механизаторы» стена хаçачĕ паха тĕслĕх кăтартать. Вăл механизаторсене яхуçалăхĕнчи пур ĕçсене те вăхăтра туса пыма чĕнсе лайăх содержанипе тухса тăрать.

Колхозсемпе МТС-сенчи стена хаçачĕсен пĕтĕм ĕçне халĕ КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсене тата партипе правительство яхуçалăх ыйтăвĕсем тăрăх йышăннă ытти паллă постановленисене ăнăçлăн пурнăçлас тĕллевпе туса пырас пулать. Çавăнпа та КПСС райкомĕсен, пуçламăш парторганизацисен стена хаçачĕсен редколлегийĕсене куллехи ĕçре вăйлăн пулăшса тăмалла.

Районти хаçатсен стена хаçачĕсене вăхăтран вăхăта тишкерсе тухса, вĕсем çинчен статьясем пичетлемелле, стена хаçат редколлегийĕсен ĕçне тĕрĕс йĕркелеме усăллă канаш памалла, стена хаçачĕ кăларас ĕçри çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме пулăшмалла.

Стена хаçачĕн идейăлла тата культурăлла шайне çĕклес тĕлĕшпе уйрăмах нумай ĕçлеме кирлĕ. Хăшпĕр стена хаçачĕсен чĕлхи усăмлă мар, çавăнпа унти статьясене ăнланма та йывăр. Ку çеç те мар. Хăшпĕр колхозсенче стена хаçатне ячĕшĕн çеç кăлараççĕ. Стена хаçачĕсен ĕçне парти организацийĕсем çителĕксĕр ертсе пынă пирки, хăшпĕр стена хаçачĕсен редколлегийĕсенче ĕçлеме пуçарусăр, ку ĕçе юратман тата критикăпа самокритикăна сарса пыма пултарайман е авторитетсăр çынсене уйăрса лартаççĕ. Çавăн пек тунин юрăхсăр. Мĕншĕн тесен, ун пек чухне стена хаçачĕсем хăйсем тавра актива кирлĕ таран пĕтĕçтерейменççĕ. Стена хаçатне çыракансем сахал пулнă пирки, вăл колхозри чи кирлĕ ыйтусене хускатаймасть.

КПСС райкомĕсен, пуçламăш парторганизацисен стена хаçачĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме тăрăшмалла. Стена хаçачĕсен редколлегийĕсене тĕреклетмелле, вĕсен ĕçне куллен ертсе пымалла. Çавăн пек тусан, стена хаçачĕсем хăйсен идейăлла-политикăлла тата культурăлла шайне куллен ÿстерсе пырĕç, хамăр çĕршывра яхуçалăх продукчĕсем нумайран та нумай пулмалла тăвас задачăна пурнăçлас ĕçре парти организацийĕсене пулăшĕç, корреспондентсен йышне ÿстерсе, кашни колхозри, МТС-ри тата совхозри ĕçсене лайăхлатас тĕлĕшпе хăйсен пĕлтерĕшне пысăклатĕç.

Конституци кунĕ ячĕпе

[...]ВЕККА, декабрĕн 1-мĕшĕ. (Телехыпар корр.). Шахтерсем валли тăвакан завод коллективĕ пĕтĕм [...]не—СССР Конституцийĕн кунне [...]ствăра çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе [...]ет. Завод ноябрь уйăхĕнче [...] туса кăлармалли плана 103,4 [...] тултарчĕ. Сурт тăвакансем, Конституци кунĕ умĕнхи социализмла ăмăртăва [...], çулталăкри плана [...] тултарма [...] рабочисем хăйсем [...].

Цехсем хушшинчи социализмла ăмăртура çуртсем тăвакан тата хăма çуракан цехсем малта пыраççĕ. Çуртсем тăвакан цех коллективĕ иртнĕ уйăхри плана 25 кун хушшинче пурнăçларĕ, планран иртерсе нумай çуртсем туса кăларчĕ. Хăма çуракан цех ноябрь уйăхĕнчи плана срокчен тăватă кун маларах тултарчĕ.

Социализмла ăмăртура чылай рабочисем ĕç тухăçлăхне палăрмаллах ÿстерчĕç. [...] 70 процентчĕ чухлĕ ÿстернĕ[...].

Тăван çĕршывра

С. М. Кирова асăнса

УРЖУМ (Киров облаçĕ). Революцин сулăмлă трибунне С. М. Кирова тăшмансем тискеррĕн вĕлернĕренпе декабрĕн 1-мĕшĕнче 19 çул çитрĕ. Уржум хулинчи ĕççыннисем С. М. Кирова ячĕпе асра тытса пурăнаççĕ. Çак кунсенче районти предприятисемпе колхозсенче тата учрежденисенче агитаторсем С. М. Кировăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен каласусем тата докладсем ирттереççĕ.

С. М. Кировăн музей-çуртне пырса куракансем нумай. Кунта облаçри чылай районсенчен, çавăн пекех Коми, Мари тата Удмурт автономиллĕ республикăсенчен рабочисен, колхозниксен, шкулсенче вĕренекенсен вуншар ушкăнĕсем экскурсие пулнă.

БАКУ. Баку хули варринче Хагани урамĕнче Сергей Миронович Киров пурăннă çурт пур. Çак çуртра С. М. Киров Азербайджанри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральнăй Комитечĕн секретарĕ пулса ĕçленĕ чухне 1921 çултан пуçласа 1926 çула çитиччен пурăннă. Вăл пурăннă хваттерте халĕ музей. Унта нефтяниксем, машинăсем тăвакансем, кил хуçи хĕрарăмсем, вĕренекенсем, Совет Çарĕпе Флочĕн воинĕсем нумайăн пырса кураççĕ. Музейра 400 ытла экспонат пухса хунă.

Сулăмлă революционера асăнса парти комитечĕсен библиотекисенче, культура дворецĕсенче, клубсенче выставкăсемпе фотовитринăсем тунă. (ТАСС).

Синоп бухтинчи çапăçу пулнăранпа 100 çул çитрĕ

СЕВАСТОПОЛЬ, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Севастопольри ĕççыннисемпе Хура тинĕс флотĕнчи çар морякĕсем Синоп патĕнчи çапăçу пулнăранпа 100 çул тултарнине анлăн палăртаççĕ.

Ноябрĕн 29-мĕшĕнче флот офицерĕсен суртĕнче: «Вырăссен Хура тинĕс флочĕ Синоп бухтинче туроксен флотне çĕнтернĕренпе 100 çул тултарни» темăпа лекци пулнă.

Офицерсен суртĕнче уçнă пысăк выставка вырăссен тинĕс-çар флочĕн историйĕнчи паллă ĕçсене кăтартса парать.

Тинĕс библиотекинче литература выставки организациленĕ. Кунта 1878—1898 çулсенче пичетлесе кăларнă сайра тĕл пулакан кĕнекесем пур. Çак кĕнекесенче вырăссен паллă флотоводецĕ Нахимов çинчен, вырăссен флочĕ Синоп патĕнчи çапăçура паллă çĕнтерÿ туни çинчен çырнă.



Вильнюс. Литва ССР-ĕнчи пасарсенче колхозла суту-илÿ сарăлсах пырать.
УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Вильнюс хулинчи колхоз пасарĕнче аш-какай тата сĕт-çу сутмалли çĕнĕрен тунă павильон.
Л. МЕЙНЕРТ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Демократиллĕ Германи Республикин суту-илÿ делегацийĕ Мускава килнĕ

Ноябрĕн 29-мĕшĕнче Мускава Демократиллĕ Германи Республикин суту-илÿ делегацийĕ килнĕ. Делегацие Тулашри тата Германин шалти суту-илÿ министрĕ К. Грегор ертсе пырать.

Аэродромра делегацие СССР Тулашри суту-илÿ министрĕн заместителĕ С. А. Борисов, СССР Тулашри суту-илÿ министерствин Коллегийĕн членĕ М. Г. Лошаков, СССР Тулашри суту-илÿ министерствин халăх демократи çĕршывĕсемпе суту-илÿ тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен Управленийĕн Германи Пайĕн Начальникĕ В. В. Мартынов тата СССР Тулашри суту-илÿ министерствин Протокол Пайĕн Начальникĕ И. С. Андриенко кĕтсе илнĕ.

Делегацие çавăн пекех Демократиллĕ Германи Республикин Мускаври Посольствин членĕсем, Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посол Р. Аппельт кĕтсе илнĕ.

Çулталăкри плана срокчен тултарнă

ХАРЬКОВ, ноябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Çĕнер машинăсем тăвакан «Механолит» завод коллективĕ çулталăкри плана срокчен тултарнă. Предприятире пур рабочисем те нормăна ирттерсе тултараççĕ.

Кăçалхи çул завод коллективĕ çĕнĕ йышши машинăсемпе механизмсем нумай туса кăларма тытăннă. Чашăк-тирĕк çумалли машина, çăкăр касмалли механизмсем туса кăларма пуçланă. Çулталăк вĕçлениччен завод фабрика-кухньăсем, столовăйсем тата магазинсем валли 500 холодильник тата ытти тĕрлĕрен машинăсем 2 пин ытла туса парать.

КУÇАРСА ÇÜРЕМЕЛЛИ ЭЛЕКТРОСТАНЦИСЕМ

ОДЕССА, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Одессăри Дзержинский ячĕпе тăракан киноаппаратура завочĕ электростанцисем туса кăларма тытăннă. Станци хăвачĕ—70 киловатт.

Çĕнĕ электростанцин оборудованине «ЗИС-150» автомашина кузовĕ çине вырнаçтарса хартаççĕ. Унпа усă курса инçетри вырăнсенче кинокартинăсем ÿкереççĕ.

Парти пурнăçĕн хроники

МАГНИТОГОРСК. Магнитогорскри парти активĕн пухăвĕ хулара марксизм-ленинизма вĕренес ĕç мĕнле пыни çинчен сÿтсе явнă.

Хулари парторганизацире КПСС историне, политикăлла экономие, диалектикăлла тата историлле материализма харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсен йышĕ ÿснĕ.

Пухура парти райкомĕсем çумĕнчи пропагандистсен семинарĕсенче занятисене çителĕксĕр ирттернине, парторганизацисем кружоксен ĕçне япăх тĕрĕслесе тăнине палăртнă.

МАХАЧ-КАЛА. Ялсенчи агитколлективсен руководителĕсен тата чи лайăх агитаторсен республикăри канашлăвĕ пулса иртнĕ. Канашлăва КПСС Дагестан обкомĕ пухнă. Канашлура пулнисем КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă постановлени тăрăх политикăлла-масспăлла ĕçе туса пымалли задачăсем çинчен сÿтсе явнă.

Агитаторсем хăйсен ĕç опычĕ çинчен каласа панă, агробиологи наукин çитĕнĕвĕсем тата наука çитĕнĕвĕсене яхуçалăх производствине кĕртсе пырасси çинчен лекцисем итленĕ.

Ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС).

Металлургсен çĕнтерĕвĕ

МАГНИТОГОРСК, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Магнитогорскри Сталин ячĕпе тăракан металлурги комбиначĕ 11 уйăхри плана срокчен пурнăçланă. Металлургсен ĕç тухăçлăхĕ, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 6 процент ÿснĕ.

Удобрени тума торф хатĕрлеççĕ

ЛУЦК. (ТАСС). Волынь облаçĕнчи колхозниксем виççĕмĕш çул ĕнтĕ уй-хире тăприна çемçетме торф хатĕрлеççĕ. Опыт кăтартса панă тăрăх, торфа тислĕкпе хутăштарса уя кăларни яхуçалăх культурисен тухăçлăхне чылай ÿстерме пулăшать. Облаçри колхозсем торфа выльăх айне сарса параççĕ. Кунта известьпе минераллă удобренисене торф компосчĕсемпе хутăштарса усă курма тытăннă.

Кăçал облаçри колхозсем, механизаторсем пулăшнипе, пĕлтĕрхинчен 100 пин тонна ытларах торф хатĕрлесе, выльăх-чĕрлĕх витисем патне турттарса хунă. Хĕллехи вăхăтра миллион тонна торф хатĕрлеме палăртнă.

Хамăр республикăра

Плана тултарнă

УЛАТĂР. Сăр агентствин ОРС-ĕ Ветлуга агентствин ОРС-ĕпе ăмăртать. ОРС коллективĕ рабочисемпе служащисен ыйтăвĕсене лайăх тивĕçтерессишĕн кĕрешет. Юлашки вăхăтра ОРС вырăнта туса кăларакан япаласем—сĕтел-пукан, арча, савăт-сапа чылай туянса сутнă. Лавккасем хушшинчи ăмăртура уйрăмах иккĕмĕш, виççĕмĕш лавккасем тата куçса çÿрекен лавкка паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем çулталăкри тавар çаврăнăш планне икĕ уйăх маларах тултарнă.

ОРС çулталăкри тавар çаврăнăш планне срокчен тултарчĕ. ОРС коллективĕ, партипе правительство суту-илÿ ĕçне малалла аталантарма йышăннă постановленине хавхаланса, тата тухăçлăрах ĕçлеме тăрăшать.

Н. АННЕНКОВ.

Малта пыракан химлесхоз

«Волгохимлес» треста пăхăнса тăракан предприятисем хушшинчи ăмăртура Улатăрти химлесхоз малта пырать. Сухăр хатĕрлемелли, турттарса кăлармалли тата ăсатмалли çулталăкри плана вăл 10 уйăхра тултарчĕ, ĕç тухăçлăхне 10 процент ÿстерчĕ, продукцин хăйне ларакан хакне 4,2 процент йÿнетрĕ, 0,5 миллион тенкĕ тупăш турĕ.

Виççĕмĕш кварталта уйрăмах паха тĕслĕхсем кăтартнăшăн ку химлесхоза Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне панă. ВЦСПС тата СССР Вăрман хуçалăх промышленноçĕ министерствин те коллективăн кастарай [...] хавхаланă—13 пин тенкĕ преми памалла тунă.

Н. ЖИКИН.

Вăрнар МТС-ĕнчи механизаторсем хушшинче тракторсемпе ытти яхуçалăх машинисене вăхăтра юсаса пĕтерессишĕн социализмла ăмăрту анлăн сарăлнă.
УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: ăмăртура малта пыракан механизаторсем П. Николаев, А. Макаров, Т. Павлов тата Н. Семенов мастерскойра ДТ-54 трактора пухаççĕ.
С. ВИКТОРИНОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Кашни вĕллерен 77 килограмм пыл

ÇĔПРЕÇ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн вуçă утар. Унта пурĕ 213 вĕлле. Пĕлтĕр кашни вĕллерен 82-шер килограмм пыл илнĕ. Çав вăхăтрах вĕллесен хисепне те нумай ÿстернĕ. Кăçал пыл пухмалли вăхăтра [...] пулни те, утартан пысăк тупăш илнĕ. [...] П. Артемьевпа К. Ефимов пчеловодсем тăрăшса ĕçленипе кашни вĕллерен 77-шер килограмм пыл илнĕ.

Колхоз пыл сутса кашни çулах пысăк тупăш курать. Хурт-хăмăр ĕстисем [...] стиков, Артемьев тата Ефимов юлташсене планран ирттерсе пыл [...] тÿлесе 108 килограмм пыл панă.

Н. ТИХОНОВ.

Колхоз пулăшнипе

ЧУРАЧĂК. «Красный восток» яхуçалăх артелĕн членĕсем партин Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн постановленине пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕç. Колхозниксем выльăх-чĕрлĕх нумай туянаççĕ. Нумаях пулмасть колхозри 5 хуçалăх колхоз правленийĕ пулăшнипе ĕнесем туянчĕç.

Кунти колхоз членĕсем вăйлă тырпулшăн тата йышлă та тухăçлă выльăх-чĕрлĕхшĕн кĕрешнĕ вăхăтрах, техникăлла культура—хăйла ĕрчетес тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем хăмларан çуллен пысăк тупăш илеççĕ. Иртнĕ çулта колхоз хăмларан 16 пин тенкĕ, кăçал 26 пин тенкĕ укçа тата 68 центнер тулă илнĕ.

А. ЕГОРОВ.

Вăйлă тырпулшăн

КОМСОМОЛЬСКИ. Мичурин ячĕпе тăракан колхоз кăçал тухăçлă тырпул туса илчĕ.

Яхуçалăх ĕçĕсене анăçлă вĕçленĕ. Колхоз членĕсем çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçе анлăн сарса ячĕç. А. Коновалов юлташ ертсе пыракан трактор бригади пулăшнипе колхоз кĕрхи серепа тата пысăк нахаăхне кĕрхи сĕртме сухи туса хăварчĕ. 153 гектар çинче хура сĕртме тунă. Пур культурăсем тĕлĕшпе те йĕрлĕх çителĕклĕ хывса хăварнă.

Хăшпĕр бригадисенче кашни кунах 28 лаша тислĕк кăлараççĕ.

Колхоз 26 [...] кăларасшăн [...] 21 [...].

Ю. [...]

Агитаторсене пулăшма

Чи демократиллĕ Конституци

Совет халăхĕ кашни çулах декабрĕн 5-мĕшĕнче СССР Конституцийĕн кунне хаваслан уявлать. Çак кашнă улăх пăçал пирĕн çĕршыва коммунизм строительствине пысăк çитĕнÿсем тунă вăхăтра иртет.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ ĕçсынннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн, вĕсен культура ÿсĕм пыракан ыйтăвĕсене чи туллин тивĕçтерессишĕн тăрăшасси пирĕн çĕршывра тĕп закон пулнине çĕнĕрен палăртрĕ. Съездăн материалĕ решенийĕсене пурнăçа кĕртес шутпа, юлашки вăхăтра СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ социализмла хуçалăхне малалла аталантармалли, халăха кирлĕ апат-çимĕçпе промышленность таварĕсем туса кăларас ĕçе татăклăнах лайăхлатмалли тата совет суту-илĕвне лайăхлатмалли майсем çинчен постановленисем йышăнчĕç. Асăннă решенисенче партийĕ пысăк тĕллевсемпе задачăсем совет ĕçсыннисен политикăлла активлăхĕпе ĕçри хастарлăхне хăватлăн çĕклерĕç, коммунизм тăвас ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарчĕç.

Коммунистсен партийĕ çул кăтартса, хавхалантарса тата организацилĕсе пынипе Тăван çĕршыв çултан-çул ытларах та ытларах чечекленсе пырать.

1936 çулхи, декабрĕн 5-мĕшĕнче Пĕтĕм Союзри Советсен Чрезвычайнăй VIII-мĕш съезчĕ СССР Конституцине йышăнчĕ. Çак Конституци çĕршыври аслă та пысăк улшăнусене закон йĕркипе çирĕплетсе хучĕ. СССР Конституцине йышăнни пирĕн çĕршывра чи çÿлĕ сăнарлă, чи çĕнĕ демократи çĕнтерниине пĕлтерчĕ.

Пирĕн çĕршывра государство влаçĕ çÿлтен пуçласа аяла çитиччен халăх аллинче тăрать. Ĕçсынни депутачĕсен Совечĕсем ССР Союзĕн политикăлла никĕсĕ пулса тăраççĕ. Вĕсем помещиксемпе капиталистсен влаçне сирпĕтсе антарнине тата пролетариат диктатури туса хунипе çирĕпленнĕ. Совет влаçĕ — халăхăн чăн-чăн влаçĕ. Ĕçсынни депутачĕсен Совечĕсем — чи демократиллĕ организацисем. Вĕсем урлă пирĕн государство управленине ĕçсыннисен анлă массисем хутшăнаççĕ.

Сăмахран, кăçалхи, февралĕн 22-мĕшĕнче пирĕн республикăри вырăнти Советсене — район, хула, ял тата поселок Совечĕсене пĕтĕмпе 10 пин депутат ытла суйланă, çав шутран коммунистсем 46,2 процент, комсомолецсем 9,1 процент, партире тăманнисем — 44,7 процент, хĕрарăмсем 33,3 процент. Советсене пĕтĕм халăх суйлать. Пирĕн аслă çĕршывра власть органĕсене суйласси тĕнчери чи демократиллĕ йĕркепе иртет.

Чăваш АССР Конституцийĕн 102-мĕш статьи тăрăх, депутатсене суйласси пурне те тивĕçлĕ, пĕр тан, вăрттăн сасăласа суйламалли правăна пурнăçланипе пулса иртет. Чăваш АССР-ĕн 18 çул тултарнă пур гражданĕсен те, мĕнле раса тата мĕнле национальность çынни пулнине, арçын-хĕрарăмне, мĕнле тĕн тытнине, мĕн чухлĕ вĕреннине, пĕр вырăнта пурăннипе пурăнманнине, мĕнле социальнăй сийрен тухнине, пурлăхĕ мĕнлине тата ĕлĕк мĕн ĕçпе пурăннине пăхмасăр — ăсран тухнисемсĕр тата суда айăпланса суйлав прависĕр хăварнă çынсемсĕр пуçне — пурин те суйлава хутшăнма тата ĕçсынни депутачĕсен Совечĕсене суйланма право пур.

Çавăн пек ирĕклĕ, демократиллĕ суйлавсем тĕнчере нихçан та, никăш çĕршывра та халиччен пулман. Патша Российĕнче вамсем суйлав прависемпе усă курнине çакăн пек тĕслĕх аван кăтартса парать. 1912 çулта Етĕрне уездĕнче гласнăйсене суйлама палăртнă суйлавçăсен уездри съезне 62 çын пухăннă, вĕсенчен: пупсем 49, усламçăсемпе мещансем — 7, купецсем — 3, чиновниксем — 2 çын тата пĕр хресчен пулнă.

Хуçалăхăн социализмла системи тата производство оруйийĕсемпе хатĕрĕсен социализмла харпăрлăхĕ ССР Союзĕн экономикăлла никĕсĕ пулса тăраççĕ. Совет Союзĕнчи социализм принципĕ: «кашниннчен унăн пултарулăхне кура, кашнине — унăн ĕçне кура» тенĕ принцип пурнăçа кĕнĕ.

Экономикăра тĕп улшăнусем пулнипе пĕрлех, халăхăн класлă составĕ те улшăнчĕ. Промышленноçра капиталистсем, ялхуçалăхĕнче кулаксем, суту-илÿ ĕçĕнче купецсемпе спекулянтсем — çак эксплуататорла классем пĕтрĕç. Çав вăхăтрах Совет Союзĕнчи рабочи класс эксплуатацирен хăтăлнă çĕнĕ класс пулса тăчĕ. Пролетариат диктатури хуçалăхăн капитализмла системине пĕтерчĕ, производство оруйийĕсемпе хатĕрĕсене пĕтĕм общество аллине парса хуçалăхăн социализмла системине туса хучĕ. Пусмăртан хăтăлнă хресченсем те улшăнчĕç, вĕсем колхоз хресченĕсем пулса тăчĕç. Халĕ вĕсен ĕçĕпе пуянлăхĕ уйрăм хуçалăхпа кая юлнă техника çине мар, пачах урăхла, коллективла харпăрлăхпа кучухнехи чи паха техника çинче, никĕсленсе тăраççĕ. Малтанхи пилĕксуллăхсем вăхăтĕнче совет интеллигенцийĕ те пачах улшăнчĕ. Ĕнерхи пусмăрта пурăннă рабочисемпе хресченсем, вĕсен ывăлĕсемпе хĕрĕсем совет влаçĕ пулăшнипе аслă шкулсенче, техникумсенче тата ытти шкулсенче наукăна вĕренеççĕ. Халĕ вĕсем хăйсен пĕлĕвĕсене коммунизмăн çутă çуртне тума параççĕ.

СССР Конституцийĕн 123-мĕш статьинче марксизм-ленинизмăн нацисемпе расăсем пурте пĕр тан пулмалли принципне çирĕплетнĕ, вăл çакăн пек çырса хунă:

«ССР Союзĕн гражданĕсен пĕртанлăх правин, вĕсен национальноçĕсене расине пăхмасăр, пĕтĕм хуçалăх, государство, культура тата общественăлла политика пурнăçĕн пĕтĕм пайĕсенче [illegible] тăрать».

[illegible]

пурăнакан пур халăхсем те — пысăккисем те, пĕчĕккисем те, вĕсем кирек-мĕнле чăххене каласан та, тĕрлĕ тĕслĕ ÿтлĕ пулсан та, пур те пĕр тан шутланаççĕ. Кунта çакна кăтартса хăварас пулать: Российĕри пур халăхсем те пĕртанлăх правине Октябрь революцийĕн пирвайхи кунĕсенчех, совет влаçĕн декречĕсем урлă илнĕ. 1918 çулхи январĕн 25-мĕшĕнче Пĕтĕм Российĕри Советсен III-мĕш съезчĕ «Российĕри халăхсен прависен декларацине» йышăннă. Çак декларацире пирĕн çĕршывра халăхсене пĕртанлăх прави парасси, вĕсене ирĕклĕн аталанма май туса парасси, самоопределени прави парасси Совет государствинче закон пулса тăни çинчен каланă. Анчах та ку вăл çĕршыври пур халăхсем те тÿрех пурнăçра пĕр тан пулса тăнине пачах та пĕлтермен. Вĕсене чăннипех те пĕр тан тăвас тесен, Россия центрĕнчи мала кайнă халăхсемпе вĕсенчен юлса пынă окраинăсенчи халăхсен хушшинчи хуçалăхпа культура аталанăвĕнчи пулнă пĕртанмарлăха пĕтерсе хумалла пулнă. Совет влаçĕ çулĕсенче, Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тăрăшнипе, аслă вырăс халăхĕ тăванла пулăшса пынипе нациллĕ окраинăсенчи халăхсен хуçалăхпа культурине вăйлатнă, ĕçсыннисен пурнăçне тĕпренех лайăхлатнă. Халĕ ĕнтĕ пирĕн çĕршывра кая юлнă халăхсем çук, вĕсем социализмла нацисем пулса тăчĕç.

Нациллĕ вак халăхсем мĕн тери хăвăрт аталанса пынине эпир Чăваш республики пурнăçĕнчен те аван куратпăр. Октябрьти социализмла Аслă революциччен, 1913 çулта халĕхи Чăваш республики йышăнакан территорире пурĕ те 23 предприяти анчах ĕçленĕ. Вăл шутран 12 хăма заводĕ, 3 эрех завочĕ, пĕспĕ ĕçлекен 3 арман, сĕтел-пукан тăвакан пĕр фабрика пулнă. Ку предприятисем пĕчĕккĕ те начар пулнă. Вĕсенчен чи пысăккинче те — Вăрмарти сĕтел-пукан фабрикинче — мĕн пурĕ 160 çын çеç ĕçленĕ. 1913 çулта пирĕн республикăри промышленность предприятийĕсем пурĕ те 13,1 миллион тенкĕлĕх кăна продукци туса кăларнă.

Совет влаçĕ çулĕсенче пирĕн республикăра кучухнехи техникăпа хĕçпăшалланнă пысăк та хăватлă заводсемпе фабрикăсем нумай туса лартнă. Вĕсен шутĕнче Шупашкарти электроаппаратура, Канашри вагонсем юсакан заводсем, Сĕмĕрлери сĕтел-пукан тăвакан комбинат тата ыттисем те. Пилĕксуллăхсем хушшинче Шупашкар, Канаш, Улатăр, Сĕмĕрле, Буславкка — промышленноçлă пысăк центрсем пулса тăчĕç. Халĕ пирĕн республика промышленноçĕ Тăван çĕршыв валли электроаппаратура, пир-авăр, сĕтел-пукан, пурăнмалли суртсем, строительство материалĕсем, чăлхасемпеноскисем, тирсăран промышленноçĕ валли экстракт тата ытти нумай япаласем туса кăларать, пăравуссемпе вагонсем чылай юсать. Нумай вăхăт иртмĕ, пирĕн республика столици — Шупашкар хули — цĕтĕм çĕршыври пир-аварпа трикотаж промышленноçĕн пысăк центрĕсенчен пĕри пулса тăрĕ.

Чăваш республикинчи шултра промышленноçăн пĕтĕм продукцийĕ вăрçă умĕнхи 1940 çул тĕлне, 1913 çулхипе танлаштарсан, 9,5 хут ÿснĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче тата ун хыççăнхи вăхăтра промышленноçăн пĕтĕм продукцийĕ çĕнĕрен 282 процент ÿснĕ. Республика промышленноçĕ 1953 çулхи 9 уйăх планне ăнăçлă тултарчĕ. Продукци туса кăлармалли плана пĕтĕмĕшпе 103.1 процент тултарнă, пĕлтĕрхи çак вăхăтрипе танлаштарсан, вăл 126.4, процент пулать.

Октябрьти социализмла Аслă революциччен чăваш халăхĕ çĕр ĕçĕпе çеç пурăннă теме те юрать. Çĕр ĕçĕсене йывăç сÿресемпе, сухапуçпе анчах тунă. Ун чухне чăваш хресченĕ ялхуçалăхĕнче наука çитĕнĕвĕсемпе усă курма пултарайман. Вăл вăхăтра чăваш ялĕсенче плугсем, сеялкăсем тата молотилкăсем питĕ сахал пулнă, вĕсем те кулаксен аллинче çеç пулнă, чухăнсемпе вăтам хресченсем çавăн пек ĕç хатĕрĕсем туянма пултарайман. Сăмахран, 1917 çулта 40 десятина пуçне пĕр плуг, 12 пин десятина пуçне пĕр сеялка, 4 пин десятина пуçне пĕр молотилка тивнĕ.

Совет влаçĕ условийĕсенче чăваш халăхĕ ялхуçалăхĕнче пысăк çитĕнÿсем турĕ, колхоз системи чăваш ялĕн сăнсăпатне йăлтах улăштарчĕ тата илемлетрĕ, чăваш хресченĕсене ĕмĕрлĕхех нушаран кăларчĕ. Пирĕн колхозниксем ялхуçалăх ĕçĕсене механизацилесе тата ялхуçалăх наукин вĕрентĕвĕпе усă курса тырпул туххăçлăхне нумай ÿстерчĕç. Тĕслĕхрен, 1952 çулта Вăрнар районĕнчи колхозсем пĕр гектар çинчен вăтам шутпа 10,33-шер центнер тĕштырăпа пăрçа культурисем, 120-шер центнер çĕрулми туса илсе амбара кĕртнĕ пулсан, капитализмла строй чухне çакăнта пурăнакан хресченсем тырă лайăх пулнă çулсенче те гектартан 4—5-шер центнертан ытла тĕштырă пуçса кĕртеймен.

Халĕ пирĕн республикăри колхозсене ялхуçалăх ĕçĕсене тума МТС-сем пулăшса пыраççĕ. Вĕсем чи çĕнĕ техникăпа пуян. Республикăра 3.650 трактор ытла (15 лаша вăйлă трактор çине куçарса шутласан), е вăрçăччен пулниннчен 2,5 хута яхăн ытларах; 924 комбайн, е 1940 çулта пулниннчен 3 хут ытларах. 1954 çулхи çуркунне тĕлне пирĕн республикăри машина-трактор станцийĕсене çĕнĕ тракторсем, комбайнсем тата ытти ялхуçалăх машинисем нумай илсе килмелле.

Социализмла экономика вăйланса пыни [illegible] пурнăçне малалла лайăхлатма, формипе нациллĕ, содержанийĕпе социализмла культурăна чечеклентерме [illegible] 26 çул [illegible]

поэтсем, артистсемпе композиторсем тата художниксем ÿсее ситĕнчĕç. Халĕ пирĕн республикăра Чăваш академи, вырăссен драма, çамрăксен театрĕсем, колхоз театрĕ, филармони, юрăпа ташă ансамблĕ, симфони оркестрĕ тата ыттисем те пур. Чăвашла хаçатсемпе журналсем тухса тăраççĕ. Чăваш государство издательстви кашни çулах темиçе миллион экземпляр кĕнеке кăларать. Марксизм-ленинизм классикĕсен, вырăссен аслă классикĕсен тата вырăс совет писателĕсен произведенийĕсене чăваш ĕçсыннисем халĕ хăйсен тăван чĕлхипе вулаççĕ. Ялсенче колхоз клубĕсем, культура çуртĕсем тата вулав çурчĕсем нумай.

СССР Конституцийĕнче çирĕплетсе панă вĕренÿ правин пуçламăшпе çичĕ çул вĕренмелли шкулсенче пур ачасене те обязательнăй йĕркепе вĕрентнипе, аслă шкулсенче лайăх вĕренекенсене государство стипенди парса тăнипе, шкулсенче тăван чĕлхепе вĕрентнипе пурнăçа кĕрсе пырать. Революциччен Чăваш республикин территорийĕнче пуçламăшпе вăтам шкулсем 463, вĕсенче 29 пин çын вĕреннĕ пулсан, халĕ пирĕн республикăра пуçламăш, çичĕ çул вĕренмелли тата вăтам шкулсем 1.077, вĕсенче 170 пин ача ытла вĕренет, 9.728 учитель ĕçлет. Унсăр пуçне, Чăваш республикинче специальнăçа вĕренмелли вăтам шкулсем 22 (вĕсенче 2.200 çамрăк вĕренет), педагогика, ялхуçалăх тата учительсем хатĕрлекен институтсем пур; çак аслă шкулсенче 2.100 çын ытла вĕренет. Совет государстви халăха вĕрентме укса нумай парать.

СССР Конституцийĕ тăрăх совет гражданĕсем ватălсан, чирлесен тата ĕçлейми пулсан материальнăй пулăшу илме пултараççĕ. Партипе правительство ĕçсыннисен сывлăхне, вĕсене медицина пулăшăвĕ парассине лайăхлатассишĕн куллен тăрăшаççĕ. Çакна эпир Чăваш республикинче сывлăха сыхлас ĕç мĕнле тăнинчен те аван курма пултаратпăр. 1913 çулта чăваш çĕршывĕнче больницăсем 19, фельдшер пункчĕсем 14, аптекăсем 5 пулнă пулсан, 1953 çулта пирĕн республикăра больницăсем 80, диспансерсем 11, врач амбулаторийĕпе пункчĕсем 25, фельдшер-акушер пункчĕсем 546, аптекăсем 56. Революциччен республикăра 22 врач, 98 фельдшерпа медицина сестрисем ĕçленĕ пулсан, халĕ пирĕн сывлăх учрежденийĕсенче 8 пин çын ытла ĕçлет, вăл шутран 668 врач. 1913 çулта сывлăха сыхлас ĕç валли 326 пин тенкĕ панă пулсан, 1953 çулта ку ĕç валли 84 миллион та 896 пин тенкĕ уйăрса панă.

СССР Конституцийĕ тăрăх совет гражданĕсен ĕçлев тата кану прависем пур. Пирĕн çĕршывра эксплуататорсен класĕсене, çынна çын эксплуатацилессине пĕтернĕ, ĕçсĕрлĕх тахçанах пĕтнĕ, кашниех хăйĕн пултарулăхне кура ĕçлет.

Совет Союзĕнче хĕрарăма арçынпа пĕр тан правăсем панă. Буржуалла государствăсенче хĕрарăмсемпе арçынсен пĕр тан прависем çинчен ĕмĕтленме те май çук. Вĕсенче нумайăшĕнче хĕрарăмсене суйлав прави пачах паманççĕ. Пĕр пек ĕçшĕн хĕрарăма арçынтан сахалтарах тÿлеççĕ

СССР Конституцийĕ гражданĕсен политикăлла ирĕклĕхне закон тăрăх çирĕплетсе пачĕ. Ĕçсыннисен ирĕклĕхĕсем — сăмах ирĕклĕхĕ, пичет ирĕклĕхĕ, пухусемпе митингсем ирттермелли ирĕклĕх, урамра шествисемпе демонстрацисем тумалли ирĕклĕх туллин пурнăçланса пыраççĕ. Совет Союзĕн тĕп законĕ гражданĕсен формальнăй прависене çырса хунипе кăна чăрăнмасть, вăл çав правасене пурнăçа кĕртме кирлĕ условисем туса парать. Çакăнпа ĕнтĕ СССР Конституцийĕ буржуалла конституцисенчен тĕпренех уйрăлса тăрать.

Конституци тăрăх Совет Союзĕн гражданĕсем общественăлла организацисене пĕрлешме пултараççĕ. Рабочипе хресченсен тата ĕçсыннисен ытти сийĕсен чи активлă та ăнлануллă гражданĕсем Совет Союзĕнчи Коммунистсен партине пĕрлешеççĕ.

Социализм çĕнтернĕ çĕршывăн тĕп законĕ гражданĕсен прависемпе ирĕклĕхне çирĕплетсе панисĕр пуçне, вĕсем çине пысăк обязанноçсем хурать. Пирĕн çĕршыври гражданĕсем пурте пĕр тан обязанноçсене пурнăçласа пыраççĕ. ССР Союзĕнчи кашни гражданин общественăлла социализмла харпăрлăха упрама тата ăна тĕреклетме тивĕç. Мĕншĕн тесен, общественăлла социализмла харпăрлăх — совет стройĕн никĕсĕ, Тăван çĕршывăн пуянлăхĕпе хăвачĕн çăлкуçĕ, совет халăхĕн пуян та культуралла пурнăçĕн çăлкуçĕ пулса тăрать.

Конституцисене тата совет влаçĕн законĕсене пăхăнса тăрасси, ĕç дисциплинине çирĕплетесси, общественăшăн тивĕçлине тÿрĕ кăмăлпа туса пырасси, социализмла пĕрлешÿллĕ пурнăç йĕркисене хисеплесси — совет ĕçсыннисен пысăкран та пысăк обязанноçĕсем.

ССР Союзĕнчи гражданĕсемшĕн çар служби хисеплĕ те чыслă тивĕç пулса тăрать.

СССР Конституцийĕ тĕнчери тÿрĕ кăмăллă миллионшар çынсем ĕмĕтленни пирĕн çĕршывра пурнăçа кĕнине, ку ĕмĕте ытти çĕршывсенче те пурнăçа кĕртме май пуррине кăтартакан питĕ хаклă та пысăк документ пулса тăрать. Вăл империализм чурахĕнче пурăнакан ĕçсыннисен миллионла массисене пахи ирĕклĕхшĕн пыракан кĕрешÿре хавхалантарать. Вăл метрополисенче пурăнакан ĕçсыннисене, колонисемпе пăхăнса тăракан çĕршывсенчи халăх массисене тата тĕнчери прогрессивлă мăнпур сынсене мирпшĕн, демократипе тата социализмшăн кĕрешме хавхалантарать.

В. ДМИТРИЕВ.

Ялти лекторсен ушкăнĕ

КАЛИНИНО. Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ ĕçсыннисене коммунизмла воспитани парас ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе парторганизацисем умне пысăк задача кăларса тăратрĕ. Çак задачăна пурнăçлассишĕн Витĕртуханти лекторсен ушкăнĕ тăрăшса ĕçлет.

Лекторсен ушкăнĕнче 12 лектор шутланать. Вĕсем ялсенче ĕçсыннисен хушшинче тĕрлĕ темăсем тăрăх час-часах лекцисемпе докладсем ирттереççĕ. Кашни пĕр лекторсем 10—12-шер лекци вуланă.

Лекторсен ушкăнĕ хăйĕн ĕçне план тăрăх туса пырать, ăна лекторсен канашлăвĕнче сÿтсе явса çирĕплетеççĕ. Ун пек канашлусем уйăхра икĕ хут пулса иртеççĕ. Пĕрремĕш канашлура лекци тезисĕсене пăхса тухаççĕ, иккĕмĕш канашлура çитес уйăх валли тунă ĕç планне çирĕплетеççĕ тата лекци ирттерес ĕçре паха тĕслĕх кăтартакан лекторсен ĕç опычĕпе паллашаççĕ.

Лекторсен ушкăнĕ ирттерекен лекцисемпе докладсене ĕçсыннисем пысăк интереспа итлеççĕ, унта вĕсем ыйтăвăх ыйтăвăх пуçĕнаççĕ. Лекторсем лекци ирттерме тĕплĕн хатĕрленеççĕ. Ку ĕçре вĕсене клуб пысăк пулăшу парать. Уйрăмах П. Смирновпа П. Максимов юлташсем лекцисене интереслă ирттереççĕ. Вĕсем ку ĕçре пысăк опыт туяннă.

Халĕхи вăхăтра лекторсен ушкăнĕ КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ тата партипе правительство юлашки вăхăтра йышăннă решенисене колхозниксене ăнлантарса парас тĕлĕшпе пысăк вăй хурса ĕçлет.

А. ОСОКИН.

Тăрăшса вĕренеççĕ

БУСЛАВКА. «Ударник» колхозри пуçламăш парторганизацинчи коммунистсем КПСС историне вĕренмелли кружока çÿреççĕ. Кружокра коммунистсемпе партире тăман ялти актив — пурĕ 21 çын вĕренет.

Занятисем çирĕп расписани тăрăх пулса пыраççĕ. Пропагандист П. Добрянский юлташ занятисене лайăх хатĕрленсе, идея тĕлĕшĕнчен çÿлти пуçăмра ирттерет. Кружока çÿрекенсен вĕренес кăмăлĕ пысăк.

Занятисем кашни эрнерех пĕр кун, ниçшер сехет пулаççĕ. Малтанхи сехетĕнче иртнĕ тема тăрăх юлташла калаçу пулса иртет, ун хыççăн пропагандист çĕнĕ материала ăнлантарса парать. Калаçусене уйрăмăнах Л. Абрамова, Л. Соколова, Т. Сидорова юлташсем активлă хутшăнаççĕ.

Кружок ĕçĕнче çитменлĕхсем те пурха. Хăшпĕрисем занятисене сиктерсе çÿреççĕ. Вĕсен шутне Н Московкин, К. Юрин, Т Московкина тата А. Никитина юлташсем кĕреççĕ. Çак çитменлĕхе пуçламăш парторганизаци халех пĕтерме тăрăшмалла.

И. СУЛЕЙМАНОВ.

Агитаторсен районти пухăвĕ

ШАХАСАН. Районти культура çуртĕнче агитаторсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура пурĕ 300 агитатор пулчĕ.

Агитаторсем парти райкомĕн агитаципе пропаганда пайĕн заведующийĕ Н. Михайлов юлташ тĕнчери хару-тăру çинчен, райсовет исполкомĕн председателĕ М. Иванов юлташ партипе правительство халăх ырлăхĕшĕн тăрăшни çинчен тунă докладсене итлерĕç. Докладсем хыççăн агитаторсем хăшпĕр агитколлективсен ĕçĕпе паллашрĕç, агитаторсен умĕнче тăракан задачăсене сÿтсе яврĕç.

Редакцие килнĕ çыру

Радио кĕртессе виçĕ çул кĕтетпĕр

ЕЛЧĔК. Пирĕн çĕршывра ĕçсыннисен культуралла пурнăçĕ куллен ÿсее пырать. Нумай колхозсенчи колхозниксен çурчĕсене электричество лампочкисем çутатаççĕ, вĕсенче радио калать.

1951 çулта «Смычка» колхоз членĕсем те хăйсен пухăвĕнче яла радио кĕртесси çинчен йышăнса хăварчĕç. Çак йышăнупа районти çыхăну пайĕ те килĕшрĕ, ĕçе вăраха ямасăр пурнăçа кĕртме пулчĕ. Чăнах та, кĕр çитнĕ тĕле çĕр чавса кабель хурса яла çитерчĕç. Колхозниксем хĕле кĕриччен радио итлеме тытăнатпăр тесе савăнчĕç. Анчах вĕсем кĕтни ахалех пулчĕ. Ĕç çавăнпа чăрăнса ларчĕ. Унтанпа çулталăк иртрĕ, халĕ ĕнтĕ 1953 çул та иртсе пырать. Çапах та «Смычка» колхозра радио каламасть-ха.

Çак тарана çитсе те радио каламанни районти çыхăну пайĕнчен килет. Ку çеç те мар, пĕтĕм ĕçе вăл хăй чăрмантарса пырать, колхоз умне ĕçпе çыхăнман ыйтусем кăлара-кăлара тăратать.

Яла радио кĕртес ĕçе хăвăртлатас шутпа колхоз районти çыхăну уйрăмĕ мĕн ыйтнине пурне те пурнăçа кĕртсе пычĕ. Иртнĕ çул районти çыхăну уйрăмĕ валли пралук тиесе килчĕ. Кăçал çыхăну пайĕ каллех çĕнĕ ыйту тăратрĕ: «Хăвăра валли пралук тиесе килĕр, радио кĕртес ĕçа хăвăртлататпăр», терĕç. Колхоз çакăнпа та килĕшрĕ. Вăл районти çыхăну уйрăмне Шупашкартан пĕр машина пралук илсе килсе пачĕ.

Анчах паянхи куна çитсе те пирĕн колхозра радио каламасть. Ĕç вăраха тăсăлса пыни колхозниксене пăшăрхантарать.

«Смычка» колхозра радио кĕртес ĕç çакăн пек пулса пыни çинчен районти ертсе пыракан органсенче те лайăх пĕлеççĕ, анчах тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

Колхозниксем «Смычка» колхозра çак кунсенчех радио каласса кĕтеççĕ тата районти çыхăну уйрăмĕ колхоза урăх ыйтусемпе чăрмантармасть пулĕ, тесе шутлаççĕ.

Е. ПОРТНОВ.

Хаçатсене пăхса тухни

Икĕ чĕлхепе тухакан хаçатăн çитменлĕхĕсем

Пирĕн республикăра халĕ районти хаçат пĕр вăхăтрах чăвашла тата вырăсла, пĕр хаçат — чăвашла тата тутарла тухса тăраççĕ.

Икĕ чĕлхепе тухса тăракан хаçат редакцийĕсенче ĕçлекенсене чи малтанах çакна [illegible] вырăсла [illegible] чăвашла пичетленĕ текстĕн содержанийĕ урăх чĕлхепе пичетленĕ текстăн содержанийĕпе пĕр [illegible]. Статьясемпе корреспонденцисене чăвашларан урăх чĕлхе çине е урăх чĕлхерен чăвашла куçарассипе питĕ тимлĕн тата грамматика требованийĕсене пĕр пăсмасăр туса тăни кирлĕ. Çапла тусан кăна илейăпа культура тĕлĕшĕнчен тивĕçлĕ шайра тăракан тата фактсене тĕрĕс сутатакан хаçат кăларма пулать.

Анчах икĕ чĕлхепе тухакан хаçатсен пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Сĕмĕрле районĕнчи «Социализмла ĕç» («Социалистический труд») хаçатра пичетленĕ чылай статьясемпе корреспонденцисене чăвашларан вырăсла е вырăсларан чăвашла пăсса куçарнă. Хаçатăн 45-мĕш номерĕн чăвашла текстĕнче «сантаклă ăшăтнă, хыççăн колхозсен уй-хирĕсенче тырпул хăвăрт ÿсе пуçларĕ» тенĕ. Асăннă предложение вырăсла «Наступление жарких дней вызвало бурный рост хлебов» тесе куçарнă. Ку предложенин чăвашла текстĕпе килĕшме пулать, вырăсла текстĕпе вара нимпе те килĕшме çук. «Жаркие дни» чăвашла «шăрăх кунсем» тени пулать. Пăсса куçарнине пула асăннă предложенин вырăсла текстĕн пĕлтерĕшĕ пачах урăхла пулса тухнă. Октябрĕн 11-мĕшĕнче пичетленнĕ «Мой опыт работы на тракторе КТ-12» статьяна чăвашла уйрăммăнах япăх куçарнине палăртас пулать. Ку статьяри «...за успешное освоение и использование газогенераторного трактора...» сăмах çаврăнăшне «...газогенераторла трактора аллă çаварса илсе унпа туллин усă курнăшăн...», «Разжигание трактора провожу до загрузки бункера свежими чурками, предварительно прошуровывая оставшееся топливо от предыдущей смены» предложение (ку предложени грамматика законĕсене пăхăнса тăмасть) «Трактора чĕртсе ярассине бункера çĕнĕрен чурка тултариччен, малтан бункерта юлнă чуркăна хуллен пăлхатнă хыççăн тин чĕртетĕп», тесе куçарнă. Чăвашла никçан та трактора (е ытти машинăсене) «алла çаварса илес», трактора «чĕртсе ярас» тесе каламаççĕ.

Хаçатăн чăвашла текстĕнче час-часах сурри вырăсла, сурри чăвашла предложенисемпе сăмахсем тĕл пулаççĕ: «...заводăн планна производство отдел начальникĕ» (66-мĕш №), «землеройнăй струг» (26-мĕш №) тата ытти те. «Стройдвор» сăмаха «стройкартишĕ», «стройня» сăмаха «киçĕн йăкĕрешĕ», «бункер-смеситель» сăмаха «пăтраштаракан бункер» тесе куçарнипе те килĕшме çук. Орфографилле йăнăшсем те хаçатра (уйрăмах вырăсла текстра) нумай: «90 тысячи», «не уделяют должного внимания и развития животноводства», «на занятия кружка не посещает» тата ытти те. Çаксене, паллах, ĕнтĕ, «асăрхаман йăнăшсем» тесе мăн çук, вĕсем редакци работникĕсем грамматикăн тĕп правилисене пĕлмен пирки кăна пулма пултарнă.

Хаçат час-часах хушаматсемпе цифрăсене пăтраштарать. 51-мĕш номерĕн вырăсла текстĕнче «Дружно подписались» ятлă заметкăра И. Булыгин çинчен сăмах пырать, чăвашла пичетленинче çав çынна П. Булыгин пулса тухать. Апрелĕн 19-мĕшĕнче хаçат чăвашла текстра «Г. Корнилова свинарка 10 сысна аминчен 207 çура илнĕ» тесе пĕлтерчĕ. Асăннă номерĕн вырăсла текстĕнче вăл 10 сысна аминчен 208 çура илни çинчен каланă.

Статьясемпе корреспонденцисене пĕр чĕлхерен тепĕр чĕлхе çине куçарнă чухне вырăнсăр кĕскетни пулмалла мар. Хаçатра вара куçарнă чухне чылай кĕскетнĕ статьясем курма пулать. Сăмахран, 52-мĕш номерĕн вырăсла текстĕнче «В этом году завком мебельного комбината приобрел 13 путевок в санатории и 20 — в дома отдыха» тенĕ. Ăна чăвашла çапла куçарнă: «...санаторисене майна 13 путевка туяннă». Кану çурчĕсене кайма 20 путевка туянни çинчен чăвашла текстра темшĕн асăнман.

Çакна асра тытмалла: статьясене кĕскетсе пичетлени вăл икĕ чĕлхепе тухакан хаçатсем умне лартнă требованисене пурнăçламанни пулать.

Асăннă çитменлĕхсен сăлтавĕ — хаçата икĕ чĕлхепе кăларас ĕç çине ответсăррăн пăхнинче. Çака курăнать: «Социализмла ĕç» хаçатра пичетлеме палăртнă статьясемпе корреспонденцисене пĕр чĕлхерен тепĕр чĕлхене куçарас ĕç мĕнле пулса пынипе КПСС райкомĕ те, редакци работникĕсем хăйсем те çителĕксĕр интересленеççĕ.

Калас пулать, хаçата пĕр вăхăтрах икĕ чĕлхепе кăларасси çăмăл ĕç мар. Вăл редакци работникĕсен ответлăхне татах та ÿстерет, хаçат типографийĕсем умне те çĕнĕ требованисем кăларса тăратать. Апла пулсан редакци работникĕсен пысăк тимлĕхпе ĕçлемелле, çаврăнăçуллăрах пулмалла, хăйсен пĕлĕвĕсене ÿстерес тĕлĕшпе куллен ĕçлемелле. Паллах, куçару ĕçне пĕр çын çине кăна йывăрлатма юрамасть. Куçару пахалăхĕшĕн кăларакан хаçат редакторĕ ответлă. Хаçатсене пĕр вăхăтрах икĕ чĕлхепе кăларас ĕç мĕнпур ответлăха туйса туса пымалла.

Хаçат-журнал сарас ĕç хакламан çĕрте

ПĔПРЕÇ. Районти предприятисемпе учрежденисенче, колхозсенче, шкулсенчи ĕçсыннисен хушшинче хаçат-журнал сарас ĕç, пĕтĕмĕшпе илсен, начарах пымасть. Мускавра тухакан чылай хаçат-журналсем, республикăри «Тăван Атăл» альманах ĕнене плана срокчченех тултарнă. КПСС райкомĕ пур тĕрлĕ изданисем ĕнене те плана çитес кунсенчех тултармалла тума, çак пысăк ĕçе парти активне анлăрах хутшăнтарма тăрăшать.

Пĕпреç вăрман хуçалăхĕнчи (партин пуçламăш организаци секретарĕ Михалик юлташ) рабочисемпе служащисем пурте тенĕ пек çĕнĕ çулта хаçат-журнал илсе тăма пуçлаççĕ. Главлеспродтара кантурĕнчи парторганизаци секретарĕ Шурбин юлташ рабочисемпе служащисем хушшинче 2 пин тенкĕлĕх ытла, Пĕпреçри вăтам шкулти учитель Чекушкин юлташ 2.200 тенкĕлĕх, ача çуртĕнче ĕçлекен общественăлла уполномоченнăй Федоров юлташ 1.800 тенкĕлĕх хаçат-журнал сарнă.

Çун пек паха тĕслĕхсене татах та илсе кăтартма пулать Анчах та хаçат-журнал сарас ĕçре çитменлĕхсем те çук мар-ха. Республикăра тухакан хаçат-журналсем тата районти хаçат ĕнене план питех те çителĕксĕр тулса пырать. Уйрăм хаçат-журналсене ĕçсыннисем хушшинче сарасси начар пыни мĕнрен килет-ха?

Машина-трактор станцийĕнче ĕçлекенсен шучĕ кăçал чылай ÿснĕ. Колхозсенче агрономсемпе зоотехниксем нумайăн ĕçлеççĕ. Вĕсем хаçат-журнал куллен вуласа пырсан çеç КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн историллĕ решенийĕсене ăнăçлă пурнăçа [illegible] тараççĕ. Пирĕн совет пичечĕ [illegible] рабан агрономи наукин [illegible] ялхуçалăхĕнче малта пыракан [illegible] пĕтĕçтерсе сарса пырать. Анчах [illegible] ри пуçламăш парторганизаци [illegible] терĕшĕ çинчен ялхуçалăх специалисчĕсе механизаторсене ăнлантарасс[illegible] хипе организацилемен. Колхоз[illegible] номсемпе зоотехниксенчен тата [illegible] торсенчен чылайăшĕ çак вăхăт[illegible] мĕнле хаçат-журнал та илме[illegible] Машина-трактор станцийĕн [illegible] Бурманин юлташ хăй те çак [illegible] кăтартмасть. Вăл ачисене [illegible] правда» хаçатпа «Пионер» журна[illegible] рăнса панă та, хăйне валли [illegible] çат-журнал та çырăнман.

Районти организацисемпе учр[illegible] руководителĕсем хушшинче [illegible] хаçат-журнал çырăнманнисем [illegible] пур.

— Мана хаçат çырăнма [illegible] эпĕ бюджетри укçапа çыр[illegible] журналсемпе те усă курма[illegible] тăп, — тенĕ Госбанкăн районти управляющийĕ Быков юлташ.

Вăл чăнах та нимĕнле хаç[illegible] та илме çырăнман.

Çу завочĕн директорĕ Болз[illegible] пайĕн заведующийĕ Филиппов[illegible] пайĕн заведующийĕ Абрамов [illegible] хăшпĕр руководительсем те ха[illegible] çырăнса илме васкамаççĕ.

Çĕнĕ çулшăн подписка [illegible] çак кунсенчех вĕçлени кирлĕ.

Т. МА[illegible]

Вăрнарти зооветтехникумра

Кунти зооветтехникумра зоотехниксемпе ветеринари фельдшерĕсем вĕрентсе кăлараççĕ. Вĕренекенсем валли икĕ хутлă клуб, пысăк библиотека, физкультурăпа спорт залĕ, вĕренÿ хуçалăхĕ, магазин, столовăй тата ыттисем те пур

Техникум уçăлнăранпа кунтан икĕ пине яхăн ялхуçалăх специалисчĕ вĕрентсе кăларнă. Вĕсем ялхуçалăхне аталантарассишĕн тĕрлĕ вырăнсенче тăрăшса ĕçлеççĕ. Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче кунта 48 специалист вĕрентсе кăларнă. Вĕсем Чăваш, Тутар АССР-ĕсенчи колхозсенче, ветеринари пункчĕсенче, инкубатор станцийĕсенче [illegible] че вĕренеççĕ. Иртнĕ кĕркунне [illegible] никума 60 çамрăк вĕренме [illegible]

КПСС Центральнăй Комитечĕн [illegible] брьти Пленумĕ йышăннă [illegible] вĕренекенсем хавасланса кĕт[illegible] решенисем партипе правител[illegible] çалăх специалисчĕсен ĕçне [illegible] хакланишĕн савăнаççĕ, техни[illegible] специалистсем пулса вĕренĕ[illegible] шаççĕ.

Техникумра вĕренекенсем [illegible] колхозсенче пулса докладсем [illegible] ирттереççĕ.

А. [illegible]

Советла сутă-илĕве малалла аталантарар

Сутă-илӳ работникĕсен республикăри канашлăвĕнчен

Çак кунсенче Шупашкарта сутă-илӳ работникĕсемпе столовăйсенче ĕçлекенсен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ «Советла сутă-илĕве малалла аталантарса пымалли мерăсем çинчен» йышăннă постановленине пурнăçласси тĕлĕшпе сутă-илӳ работникĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн Председатель заместителĕ И. Заикин юлташ тунă доклада сӳтсе явнă.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви халăхăн пĕрмаях ӳссе пыракан материальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене ытларах тивĕçтерессишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшаççĕ. Ĕçсыннисен пурнăçне малалла хăйăхлатса пыма партипе правительство халăха кулленхи кирлĕ япаласем туса кăларассине хăвăрт ӳстерсе пыраççĕ, ик-виç çул хушшинче халăха апат-çимĕçпе промышленность таварĕсем парса тăрассине нумай ӳстерме мерăсем йышăнаççĕ. Совет çыннисен пурнăçне малалла хăйăхлатса пырас задачăна халех пурнăçлас ĕçре тавар çаврăнăшне мĕнпур майсемпе ӳстерсе пыни тата государство, коопераци сутă-илĕвне, колхозла сутă-илĕве хăйăхлатни уйрăмах пысăк вырăн йышăнать.

Партипе правительство советла сутă-илĕве сарса пырассине питĕ пысăк вырăна хураççĕ. Çавăнпа СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ «Советла сутă-илĕве малалла аталантарса пымалли мерăсем çинчен» ятарласа постановлени йышăнчĕç.

Республикăри сутă-илӳ организацийĕсем 10 уйăхри тавар çаврăнăш планне пĕтĕмпе 103,2 процент тултарнă. Пĕлтĕрхи çак тапхăртипе танлаштарсан, кăçал сахăр 85,2 процент, аш-какай—142 процент, выльăх-чĕрлĕх çăвĕ—54,1 процент, çăм пир-авăр—38,9 процент, пурçăн пир-авăр—47,2 процент нумайрах сутнă. Тăхăр уйăх хушшинче ялта, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, 67,2 миллион тенкĕлĕх тавар ытларах сутнă. Ялти ĕçчĕнсем 4.900 велосипед туяннă. Мотоциклсемпе çĕвĕ машинисем, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, икĕ хут нумайрах сутнă.

Социализмла ăмăртăва хутшăнса, хăшпĕр сутă-илӳ предприятийĕсен коллективĕсем чылай çитĕнӳсем турĕç. Плана пур кăтартусем тăрăх та ăнăçлă тултарнăшăн СССР Сутă-илӳ министерстви пĕррĕмĕш кварталта Чăвашторгăн Çĕмĕрлери IV-мĕш магазинне (директорĕ Лашевская юлташ, местком председателĕ Китаев юлташ) виççĕмĕш преми панă. II-мĕшпе III-мĕш кварталта Шупашкарти 1-мĕш магазин иккĕмĕш преми илме тивĕçлĕ пулнă. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсовет, сутă-илӳ предприятийĕсен ăмăртăвне пăхса тухса, хăйсен куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне иккĕмĕш кварталта Чăвашторгăн Улатăрти уйрăмне, виççĕмĕш кварталта—Чăвашторгăн Çĕмĕрлери уйрăмне панилах турĕç.

Ăмăрту условийĕсене ăнăçлă пурнăçласа пынăшăн кăçал СССР Сутă-илӳ министерстви пирĕн республикăри 67 сутă-илӳ предприятийĕн коллективне тав турĕ. 17 работник «СССР Сутă-илӳ министерствин социализмла ăмăртăвĕн отличникĕ» ятлă значок илме тивĕçлĕ пулнă. Чăвашторгпа Чебторгра тавар илекенсен ыйтăвĕсене пысăк пахалăхпа тивĕçтерекен бригадăсем 16. Столовăйсемпе ресторансенче 13 бригада апат-çимĕçе лайăх пĕçерсе хатĕрлет.

Вăрмарти магазин заведующийĕ Порфирьев юлташ халăха хăçан мĕнле таварсем кирлине шута илет, магазина тăса, кăтартуллă тытать, плана тăтăшах ирттерсе тултарать. Çавăншăн ăна Чăвашпотребсоюз правленийĕпе потребительсен кооперацийĕн профсоюз обкомĕ Хисеплĕ грамота панă. Порфирьев юлташ ВЦСПСпа Центросоюзран икĕ хутчен преми илнĕ.

Сутă-илӳ организацийĕсем, пĕтĕмĕшпе илсен, тавар çаврăнăшне тултарни республикăри ĕçсыннисен кулленхи ыйтăвĕсене пур çĕрте те лайăх тивĕçтерсе пынине пĕлтермест. Канаш хулинчи сутă-илӳ предприятийĕсем тавар çаврăнăш планне 98,1 процент, Аптекоуправлени—96,7 процент, Чăвашпромсовет — 93 процент, «Союзпечать» уйрăмĕ — 91,7 процент çеç тултарнă. Республикăра сутă-илӳ халăхăн хăвăрт ӳссе пыракан ыйтăвĕсенчен юлса пырать.

Доклад тăрăх 26 çын тухса каларĕ. Вĕсем пурте совет çыннисем СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ юлашки вăхăтра йышăннă постановленисене тулли кăмăлпа кĕтсе илнине, советла сутă-илӳ хăвăрт аталанса пынине палăртрĕç. Çавăнпа пĕрлех вĕсем сутă-илӳ организацийĕсен ĕçĕнчи пысăк ситменлĕхсене хытă критиклерĕç, йăнăшсемпе ситменлĕхсене пĕтерме, халăхăн ӳссе пыракан ыйтăвĕсене лайăхрах тивĕçтерме пулăшакан пахa сĕнӳсем нумай пачĕç.

се лайăхлатма пулăшмалла. Çĕнĕ вĕнеке, илемлĕ пусма тавар, пахa савăт-сапа, производствăра кирлĕ япаласем магазинта курăнмалли вырăнта выртаççĕ, вĕсен хакĕсене пурте курма пултарччăр.

Продавецсен, магазин заведующийĕсен тавар илекенсен сĕнĕвĕсемпе ыйтăвĕсене пурне те шута илмелле тата тивĕçтермелле, йĕркесĕрлĕхсене хăвăртрах пĕтермелле. Совет çыннишĕн тăрăшасси, ун валли таварсем хăвăрт, йĕркеллĕ туянма мĕн кирлине пурне те туса парасси — сутă-илӳ организацийĕсен ĕçĕнче тĕп вырăнта тăма тивĕç.

Базăсен ĕçне йĕркелемелле, вырăнти таварсен пахалăхне лайăхлатмалла

Пренире тухса каланан нумай юлташсем базăсем япăх ĕçленине, вĕсен руководителĕсем сутă-илӳ умне çĕнĕ требованисем кăларса тăратнине ăнланса çитменнине палăртрĕç. Базăсем таварсене пĕр тикĕс уйăрса памаççĕ, тĕрлĕ йышши япаласем вăрсе килме тăрăшмаççĕ. Кайман, халăх ыйтман таварсене час-часах хистесех туянтараççĕ. Базăсен руководителĕсем çаврăнăçусăр ĕçленипе сутă-илӳ организацийĕсем миллионшар тенкĕлĕх тавар илсе çитерейменççĕ. Уйрăмах Главрыбторг базин (управляющийĕ Котелков юлташ), Главторгодежда базин (управляющийĕ Соловьева юлташ), Главторгобувь базин (управляющийĕ Истопленников юлташ) япăх ĕçленине палăртса пулать.

Етĕрнери çу завочĕ (директорĕ Смоленцев юлташ), Заготзерно кантурĕ (управляющийĕ Базаков юлташ), сĕт-çу тресчĕ тата ыттисем те сутă-илӳ организацийĕсене апат-çимĕç продукчĕсем тăратмалли нарядсене вăхăтра пурнăçламаççĕ.

Уйрăмах çăкăр тресчĕ (управляющийĕ Финкельштейн юлташ), Шупашкарти кондитер фабрики (директорĕ Егоров юлташ) япăх продукци туса кăларнине, таварсен ассортиментне нумайлатма тăрăшманнине палăртас пулать. Çăкăр заводĕсем кирлĕ пек ĕçлеменнипе магазинсемпе лавккасенче сухари, тĕрлĕ йышши булкăсем сутмаççĕ, сушка сайра хутра çеç пулать. Çăкăр тресчĕ пекарньăсен хăватне ӳстерме тăрăшмасть.

Магазинсемпе лавккасенче вырăнти предприятисем туса кăларакан таварсем сахал. Нумай çĕрте урапа-çуна, каткапичке, савăт-сапа, ача çунашки тупма хĕн. Республикăра пахa сĕтел-пукан туса кăларакан предприятисем пур. Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбиначĕ Мускаври тата ытти хуласенчи пысăк магазинсенче сутма пахa продукци туса кăларать. Çавăн пек пахa сĕтел-пукан республикăра сутмалăх та туса кăларма мĕн кирли пурте çителĕклĕ. Анчах Чăваш АССР Вырăнти тата топливо промышленность министрĕ Бобров юлташ, Чăвашпромсовет правленийĕн председателĕ Маклашкин юлташ çав пахa майсемпе усă курмаççĕ, ĕççыннисем валли пахa сĕтел-пукан ытларах туса кăларма тăрăшмаççĕ.

Вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕн предприятийĕсем туса кăларакан япаласен пахалăхĕ япăх, хаклă. Çак ситменлĕхе хăвăртрах пĕтермелле, райпромкомбинатсемпе промартельсенче производствăна механизацилемелле, вĕсене план çирĕплетсе панă чухне сутă-илӳ организацийĕсен сĕнĕвĕсене шута илмелле. Сутă-илӳ работникĕсен таварсен пахалăхне хытăрах тишкермелле. юрăхсăр, халăх кăмăлне кайман япаласене йышăнмалла мар, брак туса кăларакансене тăрă шыв çине кăларма тăрăшмалла.

Сутă-илӳ культурине ӳстермелле

Промышленноçпа ялхуçалăхĕ халăха кирлĕ таварсем нумай туса кăлараççĕ. Çав таварсене хăвăрт, пĕр чăрмавсăр ĕççыннисем патне çитересси—сутă-илӳ организацийĕсен тивĕçĕ. Санитари инспекторĕ Озерова юлташ, КПСС Улатăр хула комитечĕн секретарĕ Еремин юлташ, Куславкка райсовет исполкомĕн сутă-илӳ пайĕн заведующийĕ Кульмина юлташ та-

те нумай магазинсемпе столовăйсенче тасалăх тата йĕркелĕх, хăшпĕр продавецсем тавар кăмăлсăр, харкашса калаçнине палăртрĕç.

...ла сутă-илӳ тăвас тени ...чен малтан халăхăн пур ыйтулли тивĕçтерме кирлине ...лĕк, Советски, Первомайски, ...нино районĕсенчи магазинсемпе ...енче час-часах чи кирлĕ тавар ... çăкăр, шăрпăк, тăвар, махорка унти райпотребсоюзсемпе руководителĕсем тата райсовет ...сем халăхшăн кирлĕ пек тăрăшни ... кăтартать.

...м, колхозниксем, служащисем кирлĕ таварсене çывăхри магазинта сая ямасăр туянасшăн. ...ха тавар, ăна тата типтерлĕ ...сан, продавец Аншăн кĕтсе ...сан çын кăмăлĕ хăпарать, унăн савăнать. Пахa япаласене таса ...та усрани, апат-çимĕç продукта чĕркесе памани, продавецри тирпейлĕ, çыпăçуллă пулмани кăмăлне хуçать, тавар туянист. Канашлура премĕсемпе ... чей-сахăра супăньпе врачсем пулĕмрех тытнă тĕслĕхсене ... кăтартрĕç.

...10 уйăх хушшинче 856 магазинсемпе тата столовăйра сутă-илӳ ...сене пăсние палăртнă. Октябрьскинче, Улатăрти вăрмапромсемпе ...енче таварсен хакĕсене час-часах ... Уйрăмах столовăйсемпе ...ĕ ситменлĕхсем нумай. Ялти ...сем столовăйсенче меню ярнере пĕррех ... Шупашкар хулинчи столовăйсем йĕркесĕр... Кăçалхи çур... столовăйсемпе ресторансен трестне ...тăракан предприятисем япăх ĕçленине ĕççыннисем 190 жалоба панă. ...ри вагонсем юсакан заводра, ... сĕтел-пукан комбинатĕнче, ...рти пир-авăр комбиначĕнче касçисенче ĕçлекенсем валли вĕри ...ĕреççĕ. Пахалах, столовăйсемпе ... çавăн пек япăх ĕçленине малла тăма май çук.

Хăшпĕр магазинсемпе лавккасене ...тунаççĕ, вăхăт çитмиччен хупаççĕ... ...рах таварсене вăрттăн сутасçи... ...мпе рабочисем пурăнакан по...в çĕрулми, пахча çимĕç сутас ...сем Чăвашпотребсоюзпа рай...сем хулара тата рабочи поселокра ...утина колхозсенчен ялхуçалăх ...ем комиссие илме тĕлĕшпе пусă...аççĕ, сутă-илĕвĕн çав çĕнĕ ...ĕшсене усăллă пулнине пол...ителĕсене ăнлантарса па...

...сене лавккасенче ача-пăча ...тумтир, тумтир час-часах пул...

масть. Шкулсенчи буфетсем япăх ĕçлесçĕ, унта компот, кĕсел, сĕт, булка çителĕклĕ сутмаççĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ ялхуçалăхне малалла аталантармалли программа йышăнчĕ. Ăна пурнăçласси сутă-илӳ организацийĕсем пуçарулăх пулнинчен, колхозсен, МТСсемпе совхозсен ыйтăвĕсене вăхăтра тивĕçтерсе пынинчен сахал мар килет. Вылăх витисем, пурăнмалли çуртсем, культура учрежденийĕсем лартма, йывăр ĕçе механизацилеме, парниксемпе теплицăсем тума колхозсене оборудованипе материалсем нумай кирлĕ. Канашлура хăшпĕр районсенче кĕленче, известь, хăма тата ытти материалсем сутманнине палăртрĕç. Сутă-илӳ организацийĕсен çав таварсене çителĕклĕ кӳрсе килмелле, колхозсемпе, МТС-семпе тата совхозсемпе тачă çыхăну тытмалла.

Çавăн пек ситменлĕхсем таварсем сахаллинчен мар. Вĕсене кӳрсе килес ĕçе тĕрĕс туса пыман пирки, халăха, колхозсене хăш вăхăтра мĕнле япаласем кирлине шута илмен пирки пулаççĕ. Чăвашпотребсоюза пăхăнса тăракан базăсемпе магазинсенче нормативпа палăртнинчен ытлашши таварсем 47 миллион тенкĕлĕх пур. Ытти сутă-илӳ организацийĕсенче тата вуншар миллион тенкĕлĕх тавар усăсăр выртать. Сутă-илӳ организацийĕсем мĕнле таварсем пурри, çĕнĕрен мĕнле таварсем кӳрсе килни çинчен халăха пĕлтермеççĕ, тавар илекенсен конференцийĕсене ирттермеççĕ, ĕççыннисен сĕнĕвĕсене пурнăçламаççĕ.

Промышленность çĕнĕ йышши япаласем туса кăларать. Сутă-илӳ работникĕсен çĕнĕ таварсем çинчен тавар илме пыракансене ăнлантарса памалла, вĕсене культурăллăрах пурăнма, йăлана çĕнет-

Республикăри сутă-илӳ работникĕсен канашлăвĕнче пулнă юлташсен ушкăнĕ (сулахайран сылтăмалла): К. П. Ярузов—Етĕрне райпотребсоюзĕн председателĕ, В. С. Кузнецов—Улатăрти 15-мĕш номерлĕ магазин директорĕ, Е. Н. Маркова—Куславккари 7-мĕш номерлĕ магазин продавецĕ, Н. Н. Журавлев—Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ магазин заведующийĕ, А. Т. Пиликова — Канашри çĕкĕр сутакан магазин продавецĕ, Е. А. Плотникова—Канашри тумтир сутакан магазин директорĕ, Э. А. [illegible] тĕр магазинĕн заведующийĕ.

А. [illegible] фотографийĕ.

Сутă-илӳ кадрĕсем ытларах хатĕрлемелле

Кирек мĕнле ĕçĕн ăнăçлăхне те кадрсем, вĕсем пуçарулла пулни, хăйсен ĕçне лайăх пĕлсе тăни, социализмла ăмăртăва, самокритикăпа аялтан килекен критикăна анлă сарни татса парать. Республикăра сутă-илӳ работникĕсем пурĕ 8 пин ытла шутланаççĕ. Вăл шутран аслă шкулсенчен вĕренсе тухнисем—44, вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнисем—1.169 çын. Сутă-илӳ енĕпе аслă шкулсемпе вăтам шкулсенче ятарласа пĕлӳ илнисем вара пурĕ те 316 çын çеç. Урăхла каласан, сутă-илӳ работникĕсем хушшинче ĕçе лайăх пĕлекен специалистсем сахал. Апла пулин те вĕсене вĕрентес ĕçе йĕркелемен. Çавăнпа сутă-илӳ организацийĕсене кадрсемпе çирĕплетесси, работниксен пĕлĕвне ӳстересси, вĕсене коммунизмла воспитани парасси Сутă-илӳ министерствин, Чăвашпотребсоюзăн, партипе советсен вырăнти органĕсен пысăк та ответлă тивĕçĕ пулать.

Партипе правительство сутă-илӳ работникĕсен ĕçне пысăка хурса хаклаççĕ. Нумаях пулмасть правительство сутă-илӳ работникĕсен ĕç укçине ӳстерме, нумай çул ĕçленĕшĕн хушса тӳлеме йышăнчĕ.

Коммунистсен партийĕ çапла вĕрентет: сутă-илӳ работникĕсем—социализм ĕçченĕсен отрячĕсенчен пĕри, халăхшăн куллен-кун тăрăшса ĕçлес хисеплĕ задачăна пурнăçласа пыракан отрядсенчен пĕри пулаççĕ. Çавăнпа сутă-илӳ работникĕсем çине йĕрĕнсе пăхни палăрнине пĕтермелле, вĕсем тавра юлташла пулăшмалла тата тивĕçлипе хисеплемелле ларутăру туса хумалла.

Çĕнĕ магазинсем, столовăйсем, складсем ытларах пулччăр

Сутă-илӳ организацийĕсен умра тăракан задачăсене магазинсен, столовăйсемпе складсен хисепне ӳстермесĕр ăнăçлă пурнăçласа пыма пултараймаççĕ. Партипе правительство сутă-илĕвĕн материальнăй-техникăлла никĕсне çирĕплетессине пысăка хурса хаклаççĕ. 1954 çулта капитальнăй строительство валли Чăваш АССР Сутă-илӳ министерстви енĕпе кăçалхинчен виçĕ хут нумайрах укçа-тенкĕ уйăрса параççĕ. 1953 çулхи план тăрăх Чăвашпотребсоюзăн 3,5 миллион тенкĕ укçа хывмалла. 1954 çулта 9,5 миллион тенкĕ хывма палăртнă. Пирĕн çĕнĕ магазинсем, столовăйсем, пекарньăсем, складсем чылай туса лартмалла. Уйрăмах çĕнĕ поселоксенче, хула çывăхĕнче магазинсемпе лавккасем, столовăйсем ытларах усма тăрăшмалла.

Анчах çакна палăртас пулать: хăшпĕр сутă-илӳ работникĕсем строительство валли уйăрса паракан укçа-тенкĕпе вăхăтра усă курма тăрăшмаççĕ. Сăмахран, кăçал потребительсен кооперацийĕ енĕпе 8 пекарня туса лартмалла. Калинино, Первомайски, Октябрьски, Сĕнтĕр районĕсенче пекарньăсем тума тытăнманпа пĕрех. Складсемпе магазинсем тăвас ĕç те çителĕксĕр хăвăртлăхсемпе пулса пырать.

Сутă-илӳ министерствин, Чăвашпотребсоюзăн тата ытти сутă-илӳ организацийĕсен магазинсем, складсем, столовăйсем туса лартас ĕçе куллен тата оперативлă ертсе пымалла, уйăрса панă укçа-тенкĕпе вăхăтра усă курма тăрăшмалла.

Сутă-илӳ работникĕсене ертсе пырассине вăйлатмалла

Республикăри сутă-илӳ ĕçĕнче пысăк ситменлĕхсем пурри Сутă-илӳ министерстви, Чăвашпотребсоюз тата РСФСР Вармалпа хут промышленность министерствин УРС-ĕ хăйсене пăхăнса тăракан предприятисене тĕрĕс ертсе пыманнинчен, малта пыракан коллективсемпе работниксен пахa опытне сарманнинчен килет. Асăннă организацисен руководителĕсем вырăнта сахал пулаççĕ. КПСС Чкаловски райкомĕн секретарĕ Фомин юлташ каланă тăрăх, Сутă-илӳ министерствин руководителĕсем Чкаловски районĕнче 7—8 çул хушшинче те пулман. Чăвашпотребсоюз правленийĕн председателĕ Балашов юлташ тата унăн заместителĕсем инçетри районсенче пулмаççĕ.

Сутă-илӳ министрĕн Гавриков юлташăн, Чăвашпотребсоюз правленийĕн председателĕн Балашов юлташăн канашлура критикленинчен тивĕçлĕ вывод тумалла, работниксен ответлăхне ӳстермелле.

Ертсе пыракан хăшпĕр работниксем партипе правительство постановлени йышăннă хыççăн сутă-илӳ хăй тĕллĕн лайăхланса пырасса шанса лараççĕ. Çак сиенлĕ шухăш-туйăма пĕтерес пулать. Халĕ организацилле-массăлла ĕçе уйрăмах вăйлатмалла, йăнăшсемпе кăлтăксене çийĕнчех пĕтермелле, ыйтусене хăвăрт татса памалла.

«Вырăнсенчи совет, парти тата профсоюз организацийĕсен — тенĕ СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановленире — магазинсемпе столовăйсен ĕçне куллен-кун тĕрĕслесе тăрассине пурнăçламалла, советла сутă-илӳ принципĕсене пăснине хирĕç татăклăн кĕрешмелле, магазинсемпе столовăйсен ĕçĕнчи палăртнă ситменлĕхсене пĕтерме мерăсем вăхăтра йышăнмалла, халăхшăн тăрăшса ĕçлессине пĕрмаях хăйăхлатса пымалла».

Советла сутă-илӳ—социализмла экономикăн питĕ кирлĕ участокĕсенчен пĕри. Ăна пĕрмаях аталантарса пыни кирлĕ.

Советла сутă-илӳ работникĕсен тивĕçĕ магазинсемпе столовăйсен, базăсен ĕçĕнчи ситменлĕхсене хăвăртрах пĕтересси, советла сутă-илĕве çĕнĕ, çӳлĕрех шайăна çĕклесси пулать.

Колхозсем, совхозсем, дояркăсем хушшинче сĕт тухăçлăхне ӳстерессишĕн пыракан социализмла ăмăрту

(Ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне)

Йышăннă вырăн	Район, колхоз, совхоз ячĕсем	Колхоз председателĕсен, совхоз директорĕсен хушаматĕсем	Кашни ĕнерен сĕт суса илнĕ (килогрампа)
	СОВХОЗСЕМ		
1.	Государство селекци станцийĕ	Я. Ф. Лукьяненко	3.517
2.	Чăваш ялхуçалăх институчĕн вĕрентӳпе опыт хуçалăхĕ	М. И. Тимофеев	3.404
3.	Улатăрти махорка совхозĕ	П. М. Корольков	2.432
4.	«Росглаввино» совхозĕн хушма хуçалăхĕ	Я. В. Фомичев	2.391
5.	Государство лаша витти (Етĕрне р-нĕ)	М. И. Мельников	2.083
	КОЛХОЗСЕМ		
1.	Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз	Ф. П. Юхтанов	2.891
2.	Улатăр районĕнчи «Победа» колхоз	М. С. Мятин	2.261
3.	Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	С. К. Коротков	2.061
4.	Етĕрне районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхоз	М. Н. Князьков	1.852
5.	Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхоз	М. Г. Долгов	1.830
6.	Пăрачкав районĕнчи М. Горький ячĕпе тăракан колхоз	М. И. Хайлов	1.794
7.	Етĕрне районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз	Н. И. Рыбаков	1.673
8.	Çĕрпӳ районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхоз	И. В. Васильев	1.649
9.	Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	Е. А. Андреев	1.572
10.	Çĕрпӳ районĕнчи «Новая жизнь» колхоз	А. Н. Павлов	1.561
11.	Пăрачкав районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхоз	Т. В. Безруков	1.557
12.	Вăрнар районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхоз	А. С. Семенов	1.506
13.	Чкаловски районĕнчи «Кызыл Юлдуз» колхоз	А. Т. Тазетдинов	1.505
14.	Ишлей районĕнчи «Знамя труда» колхоз	Г. К. Мешков	1.446
15.	Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	В. В. Зайцев	1.428
16.	Пăрачкав районĕнчи Суворов ячĕпе тăракан колхоз	Н. А. Жидяев	1.403
17.	Шăхасан районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз	В. П. Павлов	1.385
18.	Чкаловски районĕнчи «Восток» колхоз	Н. Ф. Черков	1.368
19.	Пăрачкав районĕнчи «Ударник» колхоз	И. Е. Макаров	1.365
20.	Йĕпреç районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз	Н. И. Иванов	1.353
21.	Çĕмĕрле районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	А. П. Демидов	1.350
22.	Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхоз	А. А. Яблонский	1.344
23.	Муркаш районĕнчи «Аврора» колхоз	В. Г. Сорокин	1.339
24.	Пăрачкав районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз	П. И. Судленков	1.323
25.	Пăрачкав районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхоз	М. И. Тришин	1.310
26.	Ишлей районĕнчи «Урожай» колхоз	А. П. Петрова	1.308

Йышăннă вырăн	Дояркăсен хушаматĕсем	Район, совхоз, колхоз ячĕсем	Кашни ĕнерен сĕт суса илнĕ (килогрампа)
1.	А. Ф. Федорова	Государство селекци станцийĕ	3.907
2.	О. Н. Митрофанова	Государство селекци станцийĕ	3.779
3.	А. Е. Ефимова	Государство селекци станцийĕ	3.605
4.	А. Н. Никандрова	Чăваш ялхуçалăх институчĕн вĕрентӳпе опыт хуçалăхĕ	3.493
5.	О. П. Лукина	Государство селекци станцийĕ	3.431
6.	А. Г. Григорьева	Государство селекци станцийĕ	3.333
7.	Е. С. Школыгина	Улатăрти махорка совхозĕ	2.874
8.	В. Ф. Ворожейкина	Улатăрти махорка совхозĕ	2.809
9.	Г. М. Нажалкина	Улатăрти махорка совхозĕ	2.683
10.	А. А. Арсентьева	«Росглаввино» тресчĕн Шупашкарти совхозĕ	2.416
11.	Ф. М. Николаева	«Росглаввино» тресчĕн Шупашкарти совхозĕ	2.362
12.	Т. С. Рыбакова	Улатăрти махорка совхозĕ	2.334
13.	К. Н. Харитонова	Государство лаша витти (Етĕрне районĕ)	2.267
	* * *		
1.	А. С. Селиванова	Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз	2.656
2.	К. С. Молчанова	Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз	2.598
3.	З. А. Андреева	Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз	2.559
4.	М. И. Степанова	Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз	2.536
5.	А. Н. Абрамова	Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз	2.535
6.	Н. П. Бурлакова	Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	2.534
7.	К. А. Ситухина	Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	2.423
8.	М. П. Кузовенкова	Улатăр районĕнчи «Победа» колхоз	2.415
9.	Н. Д. Ерошина	Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	2.368
10.	М. Ф. Ганюшкина	Улатăр районĕнчи «Победа» колхоз	2.249
11.	О. А. Лебедева	Улатăр районĕнчи «Победа» колхоз	2.240
12.	А. П. Харитонова	Улатăр районĕнчи «Победа» колхоз	2.238
13.	Н. П. Кузина	Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	2.222
14.	С. Д. Воложинова	Улатăр районĕнчи «Победа» колхоз	2.177
15.	М. Г. Баринова	Етĕрне районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхоз	2.130
16.	М. П. Порфирьева	Вăрнар районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхоз	2.093
17.	Т. Н. Крылова	Етĕрне районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхоз	1.958
18.	А. Г. Каулина	Пăрачкав районĕнчи М. Горький ячĕпе тăракан колхоз	1.945
19.	У. М. Анисимова	Етĕрне районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхоз	1.917
20.	П. В. Заплаткина	Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхоз	1.903
21.	Ф. С. Самакова	Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	1.894
22.	З. Медведева	Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	1.886
23.	Г. В. Силантьева	Çĕрпӳ районĕнчи «Новая жизнь» колхоз	1.878
24.	А. М. Козлова	Пăрачкав районĕнчи М. Горький ячĕпе тăракан колхоз	1.875
25.	М. М. Торговцева	Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхоз	1.869
26.	П. Е. Потапова	Пăрачкав районĕнчи М. Горький ячĕпе тăракан колхоз	1.854
27.	А. Мишенькина	Етĕрне районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхоз	1.850
28.	М. Ф. Плешкова	Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхоз	1.845
29.	Н. П. Тимофеева	Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	1.840
30.	Л. Ф. Табакова	Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	1.832
31.	Е. А. Мясникова	Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхоз	1.813

(Юлашки пулать).

Колхозсенче водопроводсем тăваççĕ

Вăрнар районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем водопровод тума йышăннă. Çакăн хыççăн вĕсем ĕçе тытăннă. Ялхуçалăх министерствинчи «Водстрой» кантурĕ пысăк пулăшу панă.

Нумаях пулмасть çак колхозра водопровод туса пĕтерсе ĕçе янă. Халĕ колхоз фермисен патне 850 метртан пăрăхсем тăрăх таса шыв юхса пырать. Водопровод кашни сехетре 12 кубометр таран шыв парать.

Кун пек водопровод тума çырмаран е кӳлĕрен насуспа усăласа хăпартнă шыва тултармалли пысăк бак кирлĕ, ăна башня çине лартаççĕ.

Куславкка районĕнчи «[illegible]» колхозра, çавăн пек башньăсем[?] водопровод тунă. Кунта ялтан 24 метр çӳлĕрех вырăнти çăлкуçĕпе усă курнă. Ку çăлран икĕ километр тăршшĕ пăрăхсем тăрăх колхоз фермисене шыв юхса пырать. Водопроводпа фермăсенче çеç мар, ялти колхозниксем те усă кураççĕ. Урамсенче [illegible] колонка тунă. Халĕ колхозри [illegible] ферми валли [illegible] тума палăртнă.

Юлашки икĕ çул хушшинче чылай колхозсенче, çавăн пек Улатăр районĕнчи «Путь Ильича», «Красный луч», «Победа Октября», Етĕрне районĕнчи Маленков ячĕпе, Киров ячĕпе, Буденный ячĕпе тăракан колхозсенче водопроводсем тунă.

П. НЕВЗОРОВ.

Ют çĕршывсенчи хаçатсем тăватă державăн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне пухасси çинчен мĕн çыраççĕ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕн правительстви США, Англи тата Франци правительствисене тăватă державăн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне пухасси çинчен панă çĕнĕ нотăпа общественность хытă интересленет.

«Вашингтон пост» хаçат обозревателĕ Робертс çапла пĕлтерет: Вашингтонра шутланă тăрăх, «вырăссем, тĕрĕссипе илсен, пусарулăха Пĕрлешўллĕ Штатсенчен туртса илчĕç».

«Вашингтон пост» хаçатăн редакци статьинче çапла çырать: Совет Союзĕн сĕнĕвĕсем «нумай французсем пек Германие хĕçпăшаллантарассине хирĕç пыракансен кăмăлне кайма пултараççĕ... Государство департаменчĕ дипломатилле тата моральне пусарулăха хăйĕн аллинче сыхласа хăварас тет пулсан, унăн Совет Союзĕ тунă утăма хирĕç тĕллĕнсе ларнинчен пысăкрах ĕç тумалла».

Правительство ушкăнĕсемпе çывăх тăракан обозревательсем çакна йышăнаççĕ: совет ноти Парижра тата Лондонра США-ри официальнăй ушкăнсем шухăшланинчен пачах урăхла шухăш-кăмăл хускатнă.

«Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчĕ Уэггонер Вашингтонран çапла пĕлтерет: государство департаменчĕ совет ноти çине «сиввĕн те усăмсăр» пăхни (çак шухăш-кăмăл государство департаменчĕ, ноябрĕн 27-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтернинче палăрать) Лондонпа Парижра нота çине кăмăллăн пăхнинчен пачах уйрăлса тăрать.

«Вашингтон пост» хаçатăн обозревателĕ Робертс çапла çырать: Совет ноти «Францире Европăри йывăр лару-тăрăва çăмăллатас тĕллевпе Российăпа килĕшў тăвас шанăçа ўстерет пулмалла. Çак килĕшўре Германие тепĕр хут хĕçпăшаллантарассипе çыхăннă обязательствăсем пулмаççĕ...»

Юнайтед Пресс агентстви Вашингтонри корреспонденчĕ Гонсалес акăлчансем совет ноти пирки оптимистла шухăш-кăмăл тытни Америка дипломачĕсене «шухăша ячĕ», тесе пĕлтерет.

«Стар» хаçатăн обозревателĕ Нойес çапла пĕлтерет: Пĕрлешўллĕ Штатсем, Англипе Франци хушшинчи малтанхи хирĕçўсем совет ноти çине хăçан ответ парасси çинчен тăракан ыйту пирки пусланнă. Англипе Франци нота çине Бермуд утравĕсем çинчи канашлу пусланиччен ответ памалла тесе шутлаççĕ пулсан, тесе пĕлтерет Нойес, Пĕрлешўллĕ Штатсем вара канашлу хыççăн кăна ответ пама сĕнеççĕ. Государство департаменчĕ çакăн пек позици йышăннине французсемпе акăлчансем хирĕçлеççĕ.

«Америка стратегине палăртса тăракан дипломатсем,—тесе çырать Гонсалес,— совет нотине «тўрех хирĕç» тăни пирки нимĕн чухлĕ те иккĕленмелли юлмарĕ. Савăх та вĕсем çакна йышăнаççĕ: ку нота Бермуд утравĕсем çинчи канашлăвăн характерне, çак уйăх пуçламăшĕнче палăртнипе танлаштарсан, улăштарĕ.

ЛОНДОН, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Англири тĕрлĕрен общественлăла ушкăнсен представителĕсем, Совет правительствин юлашки нотине сўтсе явса, çакăнпа килĕшеççĕ: «ыйтусене татса памалли майсене вĕçертмелле мар».

«Йоркшир-Пост» хаçатăн дипломатилле обозревателĕ çапла çырать: «Англи шухăш-кăмăлĕпе США шухăш-кăмăлĕ, çăмăх та çук, пĕр-пĕринпе çыхăнмаççĕ. Англири официальнăй ушкăнсенче çапла шутлаççĕ: хĕвеланăçри державăсем вырăссен нотине нимĕн вырăнне те хумасан, хăйсен ĕçне пăснă кăна пулĕччĕç...»

Çак ушкăнсен шухăшĕпе, паллă тăвать обозреватель, тăватă державăн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне пухасси çинчен панă сĕнĕве, «совет ноти вырăссен политики улшăннине пĕлтермест пулин те», Хĕвеланăç сирсе яма пултараймасть.

«Нотăпа паллашни çакна кăтартса парать: Россия Европа çарĕпе Çурçĕр Атлантика союзĕ çине хăйĕн ноябрĕн 3-мĕшĕнчи нотинче каланинчен кăмăллăрах пăхмасть. Халĕ вăл çитес вăхăтра пилĕк аслă державăн канашлăвне пухасси çинчен ĕлĕкхинчен кая мар çине тăрать. Çав канашлăва Китай та хутшăнмалла. Пĕтĕмĕшпе илсен, Кремль политикин тĕллевĕсем улшăнмарĕç... Анчах çак нотăна «тĕнчери ыйтусене татса парас сĕрте тунă кăмăла кайман ĕç вырăнне шутласа» нотăран пăрăнни тĕрĕсех пулмĕччĕ. Нота, мĕнле пулсан та, Хĕвеланăç ырламалли ĕç пулса тăрать»,—тесе çырать «Бирмингам пост» хаçат.

Редакци статьинче «Йоркшир пост» хаçат çапла çырать: «Пирĕн шутпа, канашлу çинчен Совет Союзĕ панă сĕнĕве пропагандăлла утăм тесе сирсе яни тĕрĕс пулмĕччĕ. Хĕвеланăç державăсем, хăйсен Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсене Молотовпа тĕлпулма ярсан, тĕрĕс тунă пулĕччĕç».

ПАРИЖ, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Францири мĕнпур хаçатсем çакна йышăнаççĕ: Совет Союзĕ хĕвеланăçĕнчи виçĕ державăн правительствисене панă çĕнĕ нота Францири тĕрлĕ ушкăнсенче политикăлла калаçусем хускатнă.

Совет Союзĕн çĕнĕ нотине пула,—тесе çырать Жон-Морис Эрман «Либерасьон» хаçатра,—Германи енчен вăрçă хăрушлăхĕ тепĕр хут çĕкленессинчен хăтăлмалли шанăç çуралчĕ. Пумаях пулмасть пулса иртнĕ тавлашусем Франци Германи енчен вăрçă хăрушлăхĕ вăйланнипе килĕшменнине кăтартса пачĕç (çăмах Франции Наци пухăвĕнчи прениесем çинчен пырать.—Ред.)...

«Фигаро» хаçат, совет ноти пирки асăнса, çапла çырать: «Ăна малтанах сирсе яма кирлĕ мар. Лондонри тата Парижри авторитетлă ушкăнсем шăпах çавăн çинчен каларĕç».

МРП партийĕн депутачĕ Кост-Флорэ «Паризьен либере» хаçат корреспондентне çапла пĕлтернĕ: вăл тата ун майлă тăракансем «Мускав тăватă держава канашлăвне хутшăнма килĕшни çинчен пĕлтернĕшĕн савăнаççĕ. Вĕсем Мускав пĕлтернинче Хĕвелтухăçĕпе Хĕвеланăçĕ хушшинчи йывăр лару-тăрăва çăмăллатмалли шанăçа курса тăраççĕ».

«Монд» хаçат совет ноти пирки ум. статья пичетлесе кăларнă. Хаçат çырнă тăрăх, нотăра «лайăх енсем пур». Хаçат, уйрăммăн илсен, çапла çырать: «Кремль тăватă державăн Юг çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне пухма килĕщет. Ку вăл чи кирли. Çапла ĕнтĕ, совет ноти, государство департаменчĕ каланă пек, пăçăрханмалли факт пулса тăмасть. Лондонра тата Парижра хавхалану кўрекен шухăш-кăмăл пысăк пулни палăрать».

БЕРЛИН, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Совет правительстви Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне хутшăнасси çинчен ноябрĕн 26-мĕшĕнче панă нота çинчен асăнса, «Нейес Дейчланд» хаçат Совет правительстви тĕнчери мĕнпур тавлашуллă ыйтусене, уйрăммăн илсен, Германи ыйтăвне мирлĕ майпа татса парассишĕн пĕр хутчен кăна мар тăни çинчен аса илтерет. Вăл çакна паллă тăвать: калаçусем ирттерме империализмла державăсем, чи малтан, США чăрмантараççĕ.

«Националь цейтунг» хаçат хăйĕн статьисенче Совет правительствин çĕнĕ мирлĕ пусарăвне ырлать.

Совет Союзĕ хăйĕн мире юратакан политикине чăтăмлă пулса тата çине тăрса пурнăçласа пынине палăртса, хаçат çавăнпа пĕрлех çакна асăнать: калаçусем ирттерессине тата мĕнпур ыйтусене мирлĕ майпа татса парассине империализмла державăсем, уйрăммăн илсен, США чарса тăраççĕ.

«Националь цейтунг» хаçат Совет правительствин нотинче «Европа çарĕ» текенскерĕн агрессиллĕ шухăшĕ çинчен çырнипе хăй пĕтĕмпех пĕр кăмăллă пулнине палăртать. Вăл çакна кăтартса парать: «Европа çарĕ»,—унта Хĕвеланăç Германие те кĕртмелле,—Германин пĕр пайне тепĕр пайне хирĕç тăратать.

БУХАРЕСТ, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Румынири хаçатсем Совет правительствин ноябрĕн 26-мĕшĕнчи ноти çинчен нумай çыраççĕ. «Сынтейя» хаçат çапла çырать:

«Совет правительстви кăçалхи ноябрĕн 26-мĕшĕнче Франци, Англи тата США правительствисене панă нота Совет Союзĕ яланах мирлĕ политика тытса пынине çĕнĕрен ĕненмелле кăтартса паракан ĕç пулса тăрать».

Совет Союзĕн правительствин нотинче çырса кăтартнă шухăш,—кăтартса парать хаçат,—Совет Союзĕн правительствин шухăшĕ кăна мар. Çак шухăша мире юратакан мĕнпур çынсем, чи малтанах Германи милитарисчĕсен тискерлĕхне тўссе курнă халăхсем ырлаççĕ.

Мир, Европăпа пĕтĕм тĕнче интересĕсемшĕн Германи ыйтăвне татса памалли майсене Совет Союзĕн сĕнĕвĕсенче кăтартса панă çул çинче шырамалла.

Генеральнăй Ассамблейăн VIII-мĕш сессийĕ

Генеральнăй Ассамблейăн пĕрлехи ларăвĕ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Генеральнăй Ассамблейăн пленумĕнче пăхса тухма тăваттăмĕш (опекăпа ыйтăвĕсем енĕпе ĕçлекен) комитетăн докладне тăратнă. Вăл доклада Кăнтăр-Хĕвеланăç Африка ыйтăвĕ тĕлĕшпе туса хатĕрленĕ икĕ резолюци проекчĕ пур. Кăнтăр Африка Союзĕн правительстви сакăр çул хушши ĕнтĕ, ООН Уставĕн требованийĕсене пăхмасăр, Кăнтăр-Хĕвеланăç Африкăна пĕтĕм тĕнчери опека системине кĕртме килĕшмест.

Ассамблея ытларахăш сасăпа тăваттăмĕш комитетăн резолюцине çирĕплетнĕ. Комитетăн резолюцийĕ Кăнтăр Африка Союзĕ çак территорин тĕнчери статутне ООН килĕшмесĕр улăштарма пултарайманнине йышăннă, апла пулин те Кăнтăр Африка Союзĕн правительствине çак территорие пĕтĕм тĕнчери опека системине кĕртме хистемест.

12 çĕршыв делегацийĕсем, вăл шутра СССР, УССР, БССР, Польша, Чехословаки делегацийĕсем, çак резолюцие сасăланă чухне нихăш майлă та сасăламан.

Генеральнăй Ассамблея ытларахăш сасăпа резолюцин иккĕмĕш проектне йышăннă. Вăл резолюци проекчĕ Кăнтăр-Хĕвеланăç Африкăн территорине тĕнчери опека системине кĕртес пирки Генеральнăй Ассамблея йышăннă малтанхи резолюцисене çирĕплетсе калать.

Ун хыççăн Ассамблея виççĕмĕш комитет тăратнă доклада тата Экономикăпа Социальнăй Совечĕн докладĕ тĕлĕшпе хатĕрленĕ чылай резолюцисене (Совет докладĕн 4-мĕшпе 5-мĕш сыпăкĕсем) çирĕплетнĕ.

Ун хыççăн Генеральнăй Ассамблея «мĕнпур хĕçпăшаллă вăйсемпе мĕнпур хĕçпăшалсене йĕркелесе тăрасси, пулсе тăрасси тата танлаштарулă майпа чакарасси; хĕçпăшалсăрланас енĕпе ĕçлекен комиссин докладĕ» çинчен тăракан ыйту тăрăх Политикăллă комитет хатĕрленĕ доклада тата резолюци проектне пăхса тухнă.

СССР делегацийĕн пуçлăхĕ А. Я. Вышинский çапла пĕлтернĕ: хĕçпăшалсăрланас енĕпе ĕçлекен комиссин докладне Политикăлла комитетра пăхса тухнă чухне совет делегацийĕ хĕçпăшалсăрланас енĕпе ĕçлекен комисси ситеçĕксĕр ĕçленине кăтартса панăччĕ. Хĕçпăшалсăрланас енĕпе ĕçлекен комисси докладĕ те çавăн çинчен калать.

Нумай фактсем, тенĕ А. Я. Вышинский, çакăн çинчен ĕненмелле калаççĕ: США-па Англи представителĕсем çак комиссире атомлă тата халăха йышлăн пĕтермелли ытти йышши хĕçпăшалсене чарасси тата хĕçпăшалсене чакарасси çинчен тăракан ыйтăва сведенисем пухассин çинчен тăракан ыйтупа улăштарма тăрăшса пурнă. Америка разведки çакăн пек сведенисем пухассипе питĕ интересленнĕ, халĕ те уйрăммăнах хытă интересленет. Анчах çак сведенисем хĕçпăшалсене чакарас тата атомлă хĕçпăшала чарас тĕлĕшпе тумалли ĕçсемпе нимĕн чухлĕ те çыхăнса тăмаççĕ.

Вышинский малалла çакна кăтартса панă: Политикăлла комитет ячĕпе Ассамблейăна пăхса тухма тăратнă резолюци, тĕрĕссипе илсен, 14 çĕршывăн резолюцийĕ пулса тăрать. 14 çĕршывăн резолюцийĕнче пысăк ситменлĕхсем пур. Çак резолюцин тĕп ситменлĕхĕсенчен пĕри, паллă тунă Вышинский, çакă пулать: резолюци питĕ кирлĕ задачăран — хĕçпăшалсемпе хĕçпăшаллă вăйсене чăннипех чакарас, атомлă тата халăха йышлăн пĕтермелли ытти йышши хĕçпăшалсене чарас тĕлĕшпе тумалли ĕçсенчен пачах пăрăнать. Вăл Генеральнăй Ассамблея умне тăратнă требованипе, çăмахран, атомлă, водородлă тата халăха йышлăн пĕтермелли ытти йышши хĕçпăшалсемпе усă курмалла мар тăвас тата чакарас, хĕçпăшалсемпе хĕçпăшаллă вăйсене чакарас тĕлĕшпе туса хатĕрлемелли ĕçсемпе килĕшсе тăмасть.

Вышинский çапла каланă: çак резолюци проекчĕн выводсем çырнă пайĕн пĕрремĕш пунктĕнче хĕçпăшалсемпе хĕçпăшаллă вăйсене йĕркелесе тăрасси, пулесси тата чакарасси, халăха йышлăн пĕтермелли хĕçпăшала чарасси çинчен килĕшў тăвассишĕн пурте тăни, çав килĕшĕве хăвăртрах тăвассишĕн тăрăшни çинчен пĕтĕмĕшле çăмахсемпе кăна палăртнă. Анчах ку вăл тенĕ, СССР представителĕ, пачах çителĕксĕр.

Хĕçпăшалсăрланас тĕлĕшпе ĕçлекен комисси анăçлă ĕçлетĕр тесе, совет делегацийĕ тўрлетўсем сĕннĕччĕ. Анчах вăл сĕнўсене йышăнман. Политикăлла комитетра пăхса тухакан резолюци проекчĕшĕн сасăланă чухне совет делегацийĕ çавăн пирки нихăш майлă та сасăламарĕ, тесе паллă тунă СССР представителĕ. Анчах, тенĕ А. Я. Вышинский, СССР делегацийĕ çак резолюци проектне хирĕç сасăламасть, мĕншĕн тесен резолюци проектĕнчи хăшпĕр пайсем хĕçпăшалсăрланассин çинчен тăракан ыйту тĕлĕшпе делегацисен тĕрлĕ шухăшĕсене кăштах пĕрпĕрин патне çывхартаççĕ.

Ун хыççăн сасăланин сăлтавĕсем пирки США, Чехословаки тата Югослави представителĕсем тухса каланă.

Унтан Политикăлла комитетăн резолюцине тата СССР делегацийĕ çав резолюци проекчĕ çумне сĕннĕ тўрлетўсене сасăлама тăратнă. Резолюци проектне параграфсем тăрăх сасăланă. Ку проектăн пĕрремĕш параграфне пĕр кăмăллă пулса йышăннă. Вăл параграфра çапла каланă: «Генеральнăй Ассамблея, Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕ умĕнче хĕçпăшалсăрланасси çинчен тăракан ответлă ыйтăва пăхса тухасси тăнине çирĕплетсе, çаксене шута илме кирлине палăртать:

а) Мĕнпур хĕçпăшаллă вăйсемпе мĕнпур хĕçпăшалсене йĕркелесе тăрасси, пулсе тăрасси тата танлаштарулă майпа чакарса пымалла;

в) Атомлă, водородлă тата халăха йышлăн пĕтермелли ытти йышши хĕçпăшалсемпе усă курмалла мар тумалла тата вĕсене чармалла;

с) Атомлă хĕçпăшалпа усă курассине чарассине тата атомлă энергипе мирлĕ ĕçре кăна усă курассине пурнăçа кĕртес тесе, атомлă энергие тĕнчипе кирлĕ пек контроллесе тăмалла. Пĕтĕм ĕçе пĕтĕм тĕнчепе çирĕп тĕрĕслесе тăнипе пурнăçламалла, çапла вара пĕр государство та хăйĕн хăрушсăрлăхĕ пирки ан шиклентĕр».

Сасăланă чухне чылай делегацисем совет делегацийĕ сĕннĕ тўрлетўсем майлă тăнă, нумай делегацисем нихăш майлă сасăламан, çапах та сĕнўсене йышăнман.

Политикăлла комитетăн резолюци проектне ытларахăш сасăпа йышăннă. СССР, УССР, БССР, Польша тата Чехословаки делегацийĕсем çак проекта сасăланă чухне нихăш майлă та сасăламан.

Демократиллĕ Корея Халăх Республикин правительстви халăх пурнăçне лайăхлатма пысăк тимлĕхпе тăрăшать. Нумай пулмасть Корейăра куллен кирлĕ таварсем сутмалли государство хакĕсене йўнетнĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: таварсен хакне йўнетнĕ хыççăн Пхеньян хулинчи государство магазинĕсенчен пĕринче.

Хо Ши Мин Швеци хаçачĕн ыйтăвĕсем çине панă ответсем

ПАРИЖ, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви Стокгольмран пĕлтернĕ тăрăх, Швецире тухакан «Экспрессен» хаçат ĕнер Демократиллĕ Вьетнам Республикин президенчĕ Хо Ши Мин панă ответсене пичетлесе кăларнă.

«Экспрессен» хаçат çапла çырать: хаçатăн Парижри корреспонденчĕ Лефгрен сĕннипе вăл Демократиллĕ Вьетнам Республикин Пекинри миссийĕ урлă Хо Ши Мин патне телеграмма янă. Çав телеграммăра 5 ыйту пулнă. Аяларахра çав ыйтусене тата Хо Ши Мин панă ответсене пичетленĕ. Вĕсем Швеци хаçатĕнче тухнă.

Пĕрремĕш ыйту: Нумай пулмасть Франции Наци пухăвĕнче сўтсе явни Францири политикăлла деятельсенчен нумайăшĕ Индо-Китайри вăрçă пирки тăракан ыйтăва сирĕн правительствăпа тўрех калаçусем ирттернипе татса парассишĕн тăнине кăтартса пачĕ. Франци халăхне пĕтĕмĕшпе илес пулсан, çав шухăш-кăмăл тата вăйлăрах. Çав шухăш-кăмăла эсир тата сирĕн правительство ырласа йышăнатăр, тесе шутлама пулать-и?

Ответ: Вăрçа Франци правительстви Вьетнам халăхне хирĕç пуçларĕ. Вьетнам халăхĕн хĕçпăшал тытма тиврĕ, хăйĕн наци никама пăхăнманлăхне тата хăй мирлĕ пурăнма шутланине хўтĕлесе, çичсакăр çул хушши паттăррăн çапăçмалла пулчĕ. Франци колонизаторĕсем хăйсен захватнила вăрçине малалла та тăсса пырсан, Вьетнам халăхĕ патриотла вăрçăра çĕнтерў тăвичченех кĕрешĕ. Темиçе çул хушши пыракан вăрçă урокĕсене ăнланса илсе, Франци правительстви перемирри тума тата Индо-Китай ыйтăвне калаçусем ирттернипе татса пама шутлать пулсан, Демократиллĕ Вьетнам Республикин правительствипе халăх французсен сĕнĕвне сўтсе явма хатĕр.

Иккĕмĕш ыйту: Хальхи вăхăтра перемири тума майсем пур-и, перемирие мĕнле условисемпе тумалла?

Ответ: Франци правительствин вăрçă ĕçĕсене чарса лартмалла. Вара перемири пулма пултарать. Франци правительстви енчен Вьетнамăн никама пăхăнманлăхне чăннипех хисеплени çавăн пек перемирин никĕсĕ пулса тăмалла.

Виççĕмĕшпе тăваттăмĕш ыйту: Вăрçакан тепĕр енĕпе тĕл пулассине организацилес тĕлĕшпе нейтральнăй государствăра ĕç тунине эсир йышăнма пултаратăр-и? Швеци хăй енчен çавăн пек ĕç тума пултарнă пулĕччĕ-ши?

Ответ: Нейтральнăй государствăсем Вьетнамри вăрçă пĕттĕр тесе шутлаççĕ тата калаçусем пуçланччăр тесе тăрăшаççĕ пулсан, çавăн пек пуçарулла ĕçсене ырласа йышăнĕç. Анчах та перемири çинчен ирттермелли калаçусем, тĕпрен илсен, Франци правительствипе Демократиллĕ Вьетнам Республикин правительстви хушшинче татса памалли ыйту пулса тăрать.

Пиллĕкмĕш ыйту: Апла пулсан, эсир хальхи вăрçă ĕçĕсене чарса лартма май паракан конференци пухма килĕшме пултаратăр-и?

Ответ: Вăрçă пирĕн халăха калама çук нумай йывăрлăхсем кўчĕ. Франци халăхĕ те нумай асап курчĕ. Çавăн пирки ĕнтĕ Франци халăхĕ Вьетнамри вăрçа хирĕç кĕрешет.

«Эпĕ Франци халăхне тата Францири миршĕн тăракансене яланах хытă кăмăлланă, вĕсем мана çав тери савăнтарнă,— тенĕ малалла Хо Ши Мин.—Хальхи вăхăтра Вьетнамăн никама пăхăнманлăхне хирĕç кăна мар сĕмсĕррĕн агресси тăваççĕ. Франции никама пăхăнманлăхне те пысăк хăрушлăх хăратса тăрать: Америка империализмĕ Франци колонизаторĕсене Вьетнама тепĕр хут тытса илессишĕн малалла та вăрçма тата вăрçа сарса пыма хистет. Çапла майпа вăл Францие ытларах вăйсăрлатасшăн тата Вьетнамра Франци вырăнне йышăнасшăн. Тепĕр енчен, Америка империализмĕ Францие Европăри оборона пĕрлешĕвĕ тăвасси çинчен калакан договор çине ирĕксĕрлесе алă пустарма тăрăшать. Çав договор Германи милитаризмне çĕнĕрен ура çине тăратассине пĕлтерет. Франци халăхĕ никама пăхăнманлăхшăн, демократишĕн, миршĕн, Вьетнамри вăрçа чарса лартассишĕн кĕрешни Вьетнам ыйтăвне татса пама пултаракан паха факторсенчен пĕри пулать».

Совет Союзĕн культура делегацийĕ Швейцарире

БЕРН, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Хальхи вăхăтра Швейцарире совет делегацийĕ пурăнать. Вăл Швейцарие «Швейцари—СССР» обществи чĕннипе обществăн улттăмĕш конгресне пынă. Делегаци составĕнче—СССР Наука академийĕн Горький ячĕпе тăракан тĕнче литератури институчĕн директорĕ П. И. Анисимов, медицина наукисен докторĕ А. Н. Шабанов профессор тата Пĕтĕм Союзри культурăлла çыхăнусем тытакан обществăн правленийĕн президиумĕн членĕ Л. Д. Кислова.

Швейцарири общественность совет делегацийĕпе хытă интересленет. Обществăн конгресĕнче Анисимов профессор тухса каланă. Ăна делегатсемпе хăнасем ăшшăн кĕтсе илнĕ.

Совет делегацийĕн членĕсем швейцарири тĕрлĕ хуласенче: Бернра, Лозаннăра, Женевăра, Цюрихра тата Базельре докладсем туса панă. Совет делегачĕсем тухса каланине итлеме çынсем нумаййăн пухăнаççĕ. Делегатсем совет культурипе науки тунă çитĕнўсем çинчен, Совет Союзĕпе ытти çĕршывсенчи халăхсем хушшинчи туслă çыхăнусем тĕреклĕнсе пыни çинчен каласа панă.

Коммунистсен партийĕ суйлавра çитĕнў тунă

ДЕЛИ, ноябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Делири радио пĕлтернĕ тăрăх, Инди парламенчĕн халăх палатине депутатсем суйланă чухне Калькуттăри суйлав округĕсенчен пĕринче Коммунистсен партийĕн кандидачĕ Гупта çĕнтернĕ. Вăл Инди Наци конгресĕн партийĕн кандидатĕнчен 21.000 сасă ытларах пухнă.

Нумаях пулмасть çĕнĕрен тунă Андхра штатĕнче Инди парламенчĕн Штатсен советне суйланă. Виçĕ депутат хушшинче çавăн пекех Индири Коммунистсен партийĕнчен пĕр депутат суйланнă.

Иран влаçĕсем хĕсĕрлени

ТЕГЕРАН, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). «Кэйхан» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Тегеранри çар сучĕ икĕ офицера виçĕ çуллăха, пĕр офицера икĕ çуллăха тĕрмене хупмалла туса приговор йышăннă. Вĕсене «коммунистла шухăш-кăмăлсемшĕн» айăпланă. Вăл офицерсене 1952 çулхи январь уйăхĕнче арестленĕ пулнă.

Тегеранри хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Тегеранра тата провинцисенче çынсене халĕ те арестлеççĕ. «Доньяе эмруз» хаçат çапла пĕлтерет: ноябрĕн 24-мĕшĕнче Гармсарта, Тегеран çывăхĕнче, «хресченсене хĕтĕртнĕшĕн» 30 çынна арестленĕ. Ахвазере çар влаçĕсем 42 çынна арестленĕ.

Тегеранри çар влаçĕсем ноябрĕн 23-мĕшĕнче Тегеран университетĕнче медицина факультетĕнче вĕренекен 13 студента арестленĕ.

МОСАДДЫК АПАТ ЯЫШАНМА ПĂРАХНĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Тегеранри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Мосаддык доктор, (унăн ĕçне çар трибуналĕнче пăхса тухаççĕ) ĕнер каçхине апат йышăнма пăрахнă.

Пусанри пушар

ЛОНДОН, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ, Америка çарĕн представителĕсем пĕлтернĕ тăрăх, çапла пĕлтерет: Пусанра, питĕ вăйла пушарсăр пусне, ноябрĕн 27-мĕшĕнче çĕрле сахалтан та тăватă пушар тухнă. Пушарсем пирки пулнă сиен 33 миллион доллар ытла, тесе шутлаççĕ.

Туслăх вечерĕ

Педагогика институтĕнчи студентсемпе преподавательсем ноябрĕн 29-мĕшĕнче Совет Союзĕпе Китай Халăх Республики хушшинчи туслăх ячĕпе вечер ирттерчĕç. Унта Шупашкарти электроаппаратура заводĕнче ĕçлекен Лун Хан-хэ инженер пулчĕ.

Вечер питĕ лайăх иртрĕ. Малтан институтри историпе филологи факультетĕнче вĕренекен студентка А. Штрихова Совет Союзĕпе Китай халăхĕ хушшинчи аслă туслăх çинчен доклад туса пачĕ. Ун хыççăн Лун Хан-хэ юлташ тухса каларĕ. Вăл Китайра халăх республики туличчен ĕçсыннисем помещиксемпе капиталистсен пусмăрĕнче асапланса пурăнни çинчен каларĕ. Хальхи Китай пачах мар çĕнелсе улшăннă. Унта промышленность, ялхуçалăхĕ тата культура хăвăрт аталанса пырать. Лун Хан-хэ Китайри ĕçсыннисен ачисем телейлĕ пурăнни çинчен, вĕсем шкулсенче тăрăшса вĕренни, ĕçсыннисем валли çĕнĕ шкулсем нумай уçни, вĕсенче миллионшар çын вĕренни çинчен каласа пачĕ.

— Эпĕ Совет Союзĕнче—Хабаровскра, Мускавра, Шупашкарта пурăнса куртăм. Пур çĕрте те хама тăван киле пек туйрăм. Совет Союзĕнчи ырă кăмăллă халăхсене, коммунистсен партине çакăн пек телейлĕ кун-çул туса панăшăн чĕререн тав тăватăп,—терĕ вăл.

Лун Хан-хэ инженер хăйĕн тăван çĕршывĕнчи студентсене Чăвашсен педагогика институтĕнчи студентсенчен саламсем пама пулчĕ.

Студентсем концерт пачĕç. Институтăн художествăлла пултарулăх коллективĕ «Москва—Пекин», «Китай салтакĕсен походри юрри», «Ирĕке тухнă Китай» тата ытти юрăсене юрласа пачĕ. Тĕрлĕ ташăсем пулчĕç.

Вечер студентсем «Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен гимнне» юрланипе вĕçленчĕ.

М. ВОЛКОВА.

Вулакансен конференцийĕ

Ноябрĕн 27-мĕшĕнче Шупашкарти М. Горький ячĕпе тăракан библиотекăра Сталинла премин лауреачĕ В. Сафонов çырнă «Земля в цвету» кĕнеке тăрăх вулакансен конференцине ирттерчĕ. Конференцире ялхуçалăх специалисчĕсем, агрономсем, ялхуçалăх институтĕнче вĕренекен студентсем тата ытти ĕçсыннисем нумай пулчĕç. Кĕнеке содержанийĕ КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн постановленийĕ çинчен политикăлла тата наукăлла пĕлўсем сарас тĕлĕшпе ĕçлекен Пĕтĕм Союзри обществăн членĕ Ф. Абакумов юлташ сăмах каларĕ. Вăл пирĕн çĕршывра мичуринла агробиологи науки хăвăрт аталанса пынине палăртрĕ.

Ун хыççăн çак обществăн членĕ, ялхуçалăх наукисен кандидачĕ А. Соколова-Плетнева сăмах илчĕ. Вăл В. Р. Вильямс вĕрентнĕ тăрăх курăк акса тĕрĕс çавăрнăшĕ тăвас ыйту çинче чарăнса тăчĕ. М. Сретинская юлташ ялхуçалăхĕнче малта пыракансем — Социализмла Ĕç Геройĕсен паха ĕç опычĕ çинчен каласа пачĕ.

Ялхуçалăх институтĕнче вĕренекен студентсем хăйсен сăмахĕсенче паллă ученăйĕсем И. В. Мичурин, Вильямс, Т. Д. Лысенко ĕçĕсем çинчен тĕплĕн каласа пачĕç.

Вулакансен конференцийĕ интереслă иртрĕ.

Л. ЕРМ[illegible]

КĔСКЕН

КРАСНОАРМЕЙСКИ. Упири [illegible] та аслăрах классенче вĕренекен[illegible] нăй кружок организациленĕ[illegible] хоров учитель ертсе пырать[illegible] нятийĕсем эрнере виçĕ хут[illegible] Халĕ вĕсем Совет Союзĕн [illegible] Волги до Дона», «Утро Волг[illegible] ти юрăсене вĕренсе çитрĕç.

В. [illegible]

ОКТЯБРЬСКИ. Çак кунсе[illegible] Кушкă, Хуракасси тата Окт[illegible] Советĕнче медицина пункчĕс[illegible] Халĕ районта икĕ больница, [illegible] акушерка пункчĕсем 18 ĕç[illegible] пусне виçĕ ялта ача сурат[illegible] сем пур.

В. ТР[illegible]

Пĕлтерӳ

Декабрĕн 2-мĕшĕнче, 19 се[illegible] хула комитечĕн библиотеки[illegible] çул ĕçлекен политшкул ру[illegible] семинарĕ пулать. Семинарта [illegible] малли тема: «Партин II-мĕш [illegible] унăн историлле пĕлтерĕшĕ».

Семинар руководителĕ—З. [illegible]кова.

КПСС ХУЛА КО[illegible]

Редактор [illegible]
М. Н. [illegible]

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕА[illegible] декабрĕн 2-мĕшĕнче чăваш[illegible] «Юратнă хĕр». Декабрĕн 3-м[illegible] рĕсла спектакль «Не называя[illegible] ЧАСАХ! — чăвашла спектак[illegible] çулĕпе», вырăсла спектакль [illegible] рассвете».

Спектакльсем 19 сехет[illegible] пуçланаççĕ.

КИНО

«УДАРНИК»—декабрĕн [illegible] шĕнче Италире ўкерне çĕ[illegible] мира под оливами».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-87, редактор заместителĕ—6-17, ответлă секретарь—4-28, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, партии пурнăç пайĕ—3-99, обзорсен пайĕ—6-84, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 09394 Типографи № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 2371.